Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТЯБĔР 1 КĔÇНЕРНИКУН 201 (5014) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать · ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ · Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторĕн — 5—97, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—88, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ

Пайан пирĕн республикăри пуçламĕш шкулсемпе туллимар вăтам тата вăтам шкулсем 193 пин çамрăка йышăнса илеççĕ. Вĕсенчен 32.400 ача малтанхи хут парта хушшине ларать.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕн пуçламĕш кунĕ пирĕн çĕршывра чăннипех пĕтĕм халăх уйавĕ пулса тăчĕ. Çак кун совет халăхĕ Сталинла Конституцире çырса хунă вĕренÿ правипе совет гражданĕсем туллин усă курнине паллă тăвать.

Çултан-çул ÿсет çĕршывра шкулсен хисепĕ, вĕсенче вĕренекен çамрăксен хисепĕ. Ĕлĕкхи, Октябĕр революцичченхи вăхăтра чăваш халăхĕ хушшинчи шкулсенче, çĕр çын пуçне 18 çын аран-аран вĕренсе тухнă. Халĕ пирĕн республикăра хут пĕлмен çынна сайра хутра кăна тĕл пулма пулать. Халĕ пирĕн республикăра аслă шкулсем 4, педагогикă училищисем 8, вăтам шкулсем 81, туллимар вăтам шкулсем 325, пуçламĕш шкулсем 640. Вĕсенче 198 пин çын ытла, урăхла каласан, чăваш республикинчех кашни 5 çын пуçне пĕри вĕренет.

Совет правительствипе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ тата халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тăрăшнипе пирĕн çĕршывра халăха вĕрентес ĕç çÿлĕ вырăна хăпарчĕ.

Халăха çутта кăларас ĕçре учитель тĕп вырăнта тăрать. Вăл çамрăк ăрăва вĕрентсе ÿстерес ĕçре совет халăхĕн довереннăйĕ, Ленин—Сталин партийĕн довереннăйĕ. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1936 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче „учительсене персональнăй звани парасси çинчен тата шкул заведуйушчийĕсемпе директăрĕсене вырăна лартас йĕрке çинчен" йышăннă постановлени халăх учителĕн авторитетне тата ытларах ÿстерчĕ, унăн ĕçĕнчи ответлăхне хăпартрĕ.

Учитель валли пирĕн çĕршывра пур условисене те туса панă. Партипе правительствă тата халăх учителе пысăк чыс тунипе вăл хăвасланать, вăл пĕтĕм пĕлĕвне, пĕтĕм пултарулăхне çамрăк патриотсем хатĕрлес ĕçе пама тăрăшать.

Пĕтĕмпех урăхла буржуаллă государствăсенче. Унта учитель капиталиссем хушнине пурнăçлакан мĕскĕн чура вырăнĕнче кăна. Вăл пайан-ыран ĕçрен хăваласа кăларасран чĕтресе кăна пурăнать. Унăн пурнăç условийĕ ĕççĕр йулнă темиçе мĕлйуншар ĕççыннисен пурнăçĕнчен пĕре те уйрăм мар.

Августăн йулашки кунĕсенче республикăри пур районсенче те иртнĕ вĕренÿ çулĕн итогĕсене туса, малашнехи задачăсене палăртса хума учительсен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Калас пулать, çак канашлусем политикăллă пысăк хастарлăхпа иртрĕç. Канашлусенче критикăпа самокритикă вăйлă пулчĕ. Çакăнпа пĕрлех канашлусем пирĕн учитель Ленин—Сталин партийĕ тавра, Сталин йулташ тавра нихăçанхинчен те таччăн пĕтĕçсе тăнине, парти ĕçĕшĕн, тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăйне пама хатĕррине, вĕсем чăн-чăн совет патриочĕсем пулнине кăтартрĕç. Сăмах та çук, иртнĕ вĕренÿ çулĕ, вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай малала кайнине кăтартрĕ. Апла пулсан та вĕренÿ ĕçĕнче çаплах пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Фашисăмăн троцкисла-сылтăмла агенчĕсемпе буржуаллă-националиссем халăха вĕрентес ĕçре сахал мар сийен туса хăварчĕç. Вĕсем суйа сведенисем тăратса халăха вĕрентес ĕçри чăн-чăн çитменлĕхсене пытарса хăварма тăрăшнă. Çавăн пек, иртнĕ çулсенче, кашни çул 4—5 пин таран 8—12 çулхи çамрăксем шкул тулашĕнче йулнă вăхăтрах, вĕсем пур çамрăксене те вĕренĕве хутшăнтарнă тесе улталанă, вĕренÿ пахалăхĕ, уйрăмах—вырăс чĕлхине, историне вĕрентесси начар тăнă çĕртенех, ĕç аван пынă пек кăтартма пăхнă. Темиçе çул хушши шкулсем вырăс чĕлхи тата чăваш чĕлхи тăрăх учебниксĕр, программăсăр ларнă, çав вăхăтрах Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йенчен нимĕнле методикăллă кăтартусем те пулман. Вĕренÿпе воспитани ĕçне йапăхтарнă. Вĕренме пăрахнисен, пĕр класра икĕ çул хушши ларакансен хисепĕ пысăк пулнă. Тăшмансем учительсен кадрĕсене аркатма тăрăшнă. Чылай çутĕç пайĕсем, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн сăтăрла кивĕ руководстви хыççăн кайса, сахал мар тÿрĕ ĕçлекен учительсене тасаран вараланă. Çавăн пек, вырăнтан кăларса йанă 355 учительтен 212 çынна кайала ĕçе илмеле пулнă. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн учительсене çителĕксĕр сăлтавпах вырăнтан кăларас йĕркене татăклăн пĕтермеле, ку ĕçре тунă йăнăшсене пĕтĕмпех тÿрлетсе çитермеле.

Çутĕç органĕсен системинче тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерессине вăраххăн пырать. Çутĕç органĕсенче ĕçлекен пĕтĕм работниксен, пĕтĕм учительсен пайанхи вирлĕ задачи вăл—тăшмансем халăха çутта кăларас ĕçре туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене тĕпĕпех пĕтерсе вĕренÿпе воспитани ĕçне татăклăн вăйлатасси пулать.

Вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕнченех вĕренÿ ĕçне организацилĕн тытăнмала, шкулсенче организацилĕх, дисциплинă, йĕркелĕх, культуралăх пулмала. Уйрăмах иртнĕ вĕренÿ çулĕнче пулнă çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерме вĕренÿ çулĕн пуçламĕшĕнченех тытăнни кирлĕ.

Вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ. Çав вăхăтрах республикăри чылай шкулсенче учительсем çитмеççĕ. Сăмахран, Ишлей районĕнче 6 учитель, Шупашкар районĕнче 3 учитель, Вăрмар районĕнче 3 учитель, тутар шкулĕсенче 13 учитель çитмеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче, уйрăмах унăн шкул управленинче (пуçлăхĕ Просвирнин йулташ) учительсен кадрĕсем пирки тĕплĕн пĕлни çук. Çитменнине хăшпĕр учительсене икшер вырăна назначени парса пĕтернĕ, хăшпĕр çĕрте тата пĕр вырăна икшер учитель лартса тухнă. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсене халех пĕтермеле.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе парти райкомĕсен пайанах учительсене политикă йенчен воспитани парас, вĕсен политикăллă, культуралă тата педагогикăллă квалификацине хăпартас ĕçе организацилемеле, шкулта ĕçлеме педагогикă пĕлĕвĕ çитеймен учительсене пурне те заочнă вĕренĕве хутшăнтармала. Педагогикă ĕçĕнче пултарулăх йенчен уйрăмах мала тухнă педагогикă искусствинче лайăх тĕслĕх кăтартакан учительсене палăртса пырса, вĕсене халăх учителĕн хисеплĕ званине илме тивĕçлĕ тумала.

Шкулсем, учительсем, вĕренекенсем хушшинче вĕренÿ пахалăхĕшĕн вăйлă ăмăрту пуçласа йамала. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнчи социалисăмлă ăмăртура пĕр класрах икĕ çул ларассине пĕтересси, пур предметсем тăрăх та лайăх вĕрентмеле тата лайăх вĕренмеле тăвасси малти вырăнта пулмала. Ăмăртăвăн тĕп задачи вăл—ачасене коммунисла воспитани парасси, патриотисăма хăнăхтарса пырасси пулать.

Çутĕç органĕсен шкулсемпе учительсене йертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатмала, шкулсене инспектăрла пулăшу парас ĕçе вăйлатмала. Çавăнпа та райçутĕç пайĕсене „квалификацилĕ, ĕçре тĕрĕсленнĕ работниксем парса инструктăрсен аппаратне çирĕплетмеле.

Малтанхи кунсенчех шкулти общественăллă организацисен (комсомол, пионер т. ыт. организацисен) ĕçне тивĕçлĕ вырăна тăратмала. Ку ĕçре вĕсене парти организацисен хытă пулăшмала, йертсе пымала.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă йачĕпе совет учителĕсемпе нумай пинлĕ вĕренекенсене салам!

Лайăх вĕренÿ пахалăхĕшĕн, йулташсем!

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ Çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери XXIV-мĕш Кунĕ тĕлне панă ЛОЗУНГСЕМ

1. Сыва пултăр Çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери XXIV-мĕш кунĕ—пĕтĕм тĕнчери ĕç çамракĕсен империалисăмлă вăрçăпа фашисăма хирĕç, миршĕн, социалисăмшăн пыракан кĕрешÿ кунĕ!

2. Аслă Сталина Совет çамрăкĕсенчен çулăмлă салам! Сыва пултăр пирĕн учитель тата тус, халăхсен çулпуçĕ—Сталин йулташ!

3. Комсомолĕцсемпе комсомолкăсем! „Хамăр аннемĕрĕн—Пĕтĕм Сойузри Коммунисла Партин тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулăр!" (Сталин). Сыва пултăр большевиксен аслă партийĕ тата унăн Ленинла-Сталинла Тĕп Комитечĕ!

4. Çамрăк пролетарисем, капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕç çамрăкĕсем! Фашисăма—пирĕн çамрăклăхăн вилĕмлĕ тăшманне хирĕç пыракан кĕрешÿн пĕрлĕхлĕ фронтне пĕтĕçĕр!

5. Испани халăхĕн шалти тата урăх çĕршывсенчи фашисăма хирĕç пыракан кĕрешĕвĕ—малта пыракан тата прогреçсивлă пĕтĕм етемлĕхĕн ĕçĕ. Хăй никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен паттăр Испани халăхне салам!

6. Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешекен Китай халăхĕ сыва пултăр! Сыва пулччăр Китайри коммунисла партипе çамрăксен коммунисла сойузĕ!

7. Германири революцилĕ пролетарисене большевикла салам! Сыва пултăр Германири паттăр коммунисла парти! Сыва пултăр Тельман йулташ!

8. Фашиссем çынсене вĕлермели тĕнче вăрçи пуçлама тата ССР Сойузĕ çине тапăнма хатĕрленеççĕ. Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи çамрăк ăру! Миршĕн, вăрçă хăрушлăхне хирĕç кĕрешĕр! Совет Сойузне—пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн тăван çĕршывне сыхлăр! Сыва пултăр советăн мирлĕ политики!

9. „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр" (Сталин).

10. „Социалисăмлă тăван çĕршыва пурнăçа та шеллемесĕр сыхласси, унăн хăватне, ырлăхне тата мухтавне çирĕплетесси—ПСÇЛКС членĕн чи таса та чи сывăх обйазаннăçĕ" (ПСÇЛКС программи).

11. Тăван çĕршыва сыхласси—ССР Сойузĕнчи кашни гражданинăн таса тивĕçлĕхĕ пулать.

12. Сыва пултăр пирĕн тăван, никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар—ССР Сойузĕнчи халăхсен мирлĕ ĕçĕн хăватлă тĕрекĕ, Аслă Октябĕр революцийĕ кĕрешсе илнисен шанчăклă хÿралçи! Сыва пултăр Совет Сойузĕн маршалĕ, оборонăн тимĕр пек çирĕп халăх комиссарĕ—Ворошилăв йулташ!

13. Сыва пулччăр совет льотчикĕсем, хамăр тăван çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери авиаци рекорчĕсене тунă мухтавлă соколĕсем!

14. Пограничник-бойецсене, социалисăм çĕршывĕн çивчĕ куçлă часовойĕсене—салам!

15. Сыва пултăр ССР Сойузĕн Тинĕс-Çар Флочĕ — хамăр тăван çĕршывăн тинĕс чиккисен шанчăклă хуралĕ!

16. Сыва пултăр Коммунисла Интернационал—вăрçа, фашисăма тата капиталисăма хирĕç пыракан кĕрешĕве организацилесе йертсе пыраканĕ! Сыва пултăр коммунисăм!

17. Капиталисăмлă çĕршывсенчи революцилĕ çамрăксене — салам! Сыва пултăр Çамрăксен Коммунисла Интернационалĕ!

18. „Комсомол çийĕн йалан ах интернационалисăм шухăшĕ йавăнса тăни кирлĕ" (Сталин). Хамăр çĕршыври çамрăксене пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă тăванлăх шухăшĕпе воспитани парар!

19. Халăх тăшманĕсене, троцкисла-бухаринла шпионсене, диверсантсене тата террориссене—фашисăм агенчĕсене тĕппи-тымарĕпех пĕтерер! Тăван çĕршыва сутакансене—вилĕм!

20. Коминтернăн мухтавлă рулевойĕ, фашисăма хирĕç пĕр хăрамасăр кĕрешекен Димитров йулташ сыва пултăр!

21. Пĕтĕм ĕç çамрăкĕсене совет влаçĕ тавра тата çирĕпрех пĕтĕçтерер! Сыва пултăр совет правительстви тата унăн мухтавлă руководителĕ Молотăв йулташ!

22. Совет çамрăкĕсем—ĕçлев, вĕренÿ правине тата канăç правине туллин илнĕ тĕнчипе пĕртен пĕр çамрăксем. Спаçибă Сталин йулташа телейлĕ çамрăклăхшăн!

23. „Сыва пулччăр совет çамрăкĕсем!" (Сталин).

24. Марксисла-ленинла теори—пролетариат кĕрешĕвĕнче чи сивчĕ хĕçпăшал. Комсомолĕцсемпе комсомолкăсем, Марксăн — Енгелсăн — Ленинăн — Сталинăн аслă идейисене вĕренĕр! Сыва пултăр ленинисăм!

25. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне çĕнĕрен тултарма пыракансене—призывниксене салам!

26. Социалисăмлă ăмăрту йалавне çÿлерех çĕклер! Стахановла йухăма анлăрах сарар! Çамрăк рабочисемпе колхозниксем, Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа ăмăртăва хутшăнăр!

27. Совет шкулĕнче вĕренекенсем! Ăслăлăха алла илĕр! Вĕренÿ отличникĕсем пулăр!

28. Сыва пулччăр совет хĕрĕсем—социалисăмлă тăван çĕршывăн хĕрĕсем!

29. „Нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала..." (Сталин).

30. Совет Сойузĕнчи çамрăксем! Тăван çĕршыв-анне валли парнесем хатĕрлесе, тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн çĕнĕ çĕнтерÿсем туса Ленинла-Сталинла комсомолăн XX çулхи мухтавлă йубилейне тивĕçлипе кĕтсе илер!

31. Çамрăк колхозниксемпе колхозницăсем! Çулталăкра 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешĕр! Вылăх-чĕрлĕхĕн пысăк тухăçĕшĕн!

32. Большевикла парти йертсе пынипе пирĕн тăван çĕршыв валли ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăх çĕнсе илнĕ совет халăхĕн моральлĕ тата политикăллă пĕрлĕхĕ сыва пултăр!

33. Большевисăм историйĕ—çамрăк ăру валли кĕрешÿпе пурнăçăн чи лайăх шкулĕ. Комсомолĕцсем, çамрăк ĕççыннисем, Ленин—Сталин партийĕн историне вĕренĕр!

34. Йут çĕршыв разведкисен сылтăмла-троцкисла тарçисем тунă сăтăрлăх йулашкисене халăх хуçалăхĕн мĕн пур отраçлисенче те йалтах пĕтерер! ССР Сойузне социалисăмăн никам пырса тĕкĕнейми крепăçĕ туса хурар!

35. Самокритикă—кадрсене большевикла воспитани памалли никĕс. Ленинла комсомол хушшинче самокритикăна анлăрах сарар!

36. Йалана политикăран уйăрма çук. Комсомолĕцăн моральлĕ тасалăхĕ—политикă йенчен пăсăлса кайасран шанчăклă гаранти.

37. Сталинла Конституци—çĕнтерÿлĕ социалисăмăн тата чăн-чăн демократисăмăн Конституцийĕ сыва пултăр!

38. Йавăр индустрин тата транспортăн мухтавлă руководителне—Л. М. Кагановича комсомолла хĕрÿлĕ салам!

39. Сталинла наркома, халăх тăшманĕсене хирĕç ырми-канми кĕрешекен Н. И. Йежова комсомолла хĕрÿлĕ салам! Революцин шанчăклă хуралçи—НКВД сыва пултăр!

40. Сыва пулччăр совет ачисем! Хамăрăн ачасемшĕн тата ытларах тăрăшар, вĕсене тата ытларах йуратар!

41. Комсомолĕцсемпе комсомолкăсем! „Вĕренĕр большевисăма, йертсе пырăр иккĕленекенсене малала! Халапа сахалтарах çаптарăр, ытларах ĕçлĕр—вăра сирĕн ăнăхах та ĕç тухĕ". (Сталин).

42. Комсомолĕцсемпе комсомолкăсем, Совет Сойузĕнчи çамрăксем! Аслă большевикла парти тавра тачăрах пĕтĕçĕр! Сыва пултăр Марксăн — Енгелсăн — Ленинăн — Сталинăн никам çĕнтерейми йалавĕ! Хамăрăн пĕтĕм вăйсене, хамăрăн çамрăклăхăн пĕтĕм çулăмне коммунисăмăн аслă ĕçне парар!

43. Совет халăхĕн хайар тăшманĕсем Хĕрлĕ Çар хăватне ишĕлтерме хăтланчĕç. Хĕрлĕ Çарăн çамрăк бойецĕсем! Тăшмансен ирсĕр хăтланăвĕсене ответлесе çар ĕçне тата политикăна вĕренессине вăйлатăр!

44. Чиркÿ çыннисемпе сектантсем çамрăксемпе ачасен ăспуçне тĕн наркăмăшĕпе антратма тăрăшаççĕ. Мракобессен тăшманла, ишĕлтерÿлĕ ĕçне татăклă отпор парар! Тĕне хирĕçле пропагандăна анлăн сарар!

45. Революцилĕ сыхлăха вăйлатăр! Хамăр хушăри политикăллă тимсĕрлĕхе пĕтерер!

46 Троцкисла-бухаринла сутăнчăксем совет халăхĕнчен тата пирĕн çамрăксенчен хăвасла, лайăх пурнăçа туртса илесшĕн пулнă. Халăх тăшманĕсене—социалисăмлă тăван çĕршыва сутакансене нимĕнле каçару та пулмасть!

ПСÇЛКС ТĔПКОМĔ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕ

Августăн 28—29-мĕшĕсенче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Молотăв йулташ йертсе пынă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ потребительлĕ кооперацин ĕçĕ çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă, çак ыйту тăрăх потребительлĕ обществăсен Тĕп Сойузĕн ĕçне, крайсенчипе облăçсенчи потребительлĕ сойузсен ĕçне тĕрĕслеме тунă комиççи председателĕн Микойан йулташ докладне итленĕ.

Йалхуçалăх продукцийĕ вăйлăн ÿссе пынă май, хресченсем куллен кирлĕ таварсене ытларах ыйтма пуçларĕç. Социалисăмлă промышленнăç продукцийĕ калама çук пысăккăн ÿссе пыни йалти тавар çаврăнăшне, 1935 çулхипе танлаштарсан, 1938 çулта икĕ хут ытла ÿстерме май пачĕ. Анчах, Центросойуз малтанхи пекех кивĕ, ниме йурăхсăр метăдсемпе ĕçлесе пырать, хăйĕн ĕçне вăл колхозлă йалăн куллен ÿссе пыракан ыйтăвĕсемпе килĕшÿлĕн урăхлатса çĕнетмен. Центросойуз органĕсем йалсенче мĕнле таварсем кирлине пĕлмеççĕ, вĕсем йалсенче лавкасемпе складсем нумайрах уçассине йурийех чарса пыраççĕ. Центросойуз аппарачĕ тата потребительлĕ кооперацин вырăнти органĕсен аппарачĕсем политикă тата ĕç тĕлĕшĕнчен шанчăксăр çынсемпе вараланнă. Центросойуз президиумĕ потребительлĕ кооперации ĕçĕнче сăтăрлăх йулашкийĕсемпе чăн-чăн кĕрешмест.

Микойан йулташ комиççийĕ туса хатĕрленĕ пройект йалсенчи суту-илÿ ĕçĕпе потребительлĕ кооперации ĕçне лайăхлатас, йалсенче суту-илÿ тăвас ĕçе пысăклатас, растратăсемпе пурлăха çаратассине хирĕç кĕрешес, потребительлĕ кооперации органĕсене çĕнĕ, ĕçре тĕрĕсленнĕ работниксемпе çирĕплетес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртать. Çавăн пекех тата комиççи йалти потребительлĕ обществăсен çĕнĕрен туса хатĕрленĕ примерлă уставне те тăратнă.

Халăх Кумиссарĕсен Совечĕ Микойан йулташ комиççийĕн ĕçне ырланă тата унăн сĕнĕвĕсене тĕпе хурса йышăннă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи тăваттăмĕш кварталти халăх хуçалăх планне пăхса тухса çирĕплетнĕ, вăл план тăрăх сойузла, сойузлă-республикăллă тата вырăнти промышленнăç продукцийĕ, иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталтипе танлаштарсан, 21 процент ытла ÿсмеле.

Унтан Халăх Комиссарĕсен Совечĕ РСФСР тăрăх шкулсем 1938—1939-мĕш вĕренÿ çулне мĕнле хатĕрленни çинчен РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕн Тюркин йулташ докладне тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленнине тĕрĕслеме тунă комиççи председателĕн Косарĕв йулташ содокладне итленĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ комиççи сĕйланă, вăл комиççине çĕнĕ вĕренÿ çулĕпе çыхăнакан васкавлă тумалли ĕçсем тăрăх тата малашне шкул ĕçне лайăхлатас ыйтусем тăрăх сĕнÿсем хатĕрлеме хушнă.

Малала Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çурçĕр Тинĕс çулĕн тĕп управленин ĕçне лайăхлатас ыйтăва пăхса тухнă.

Унтан Халăх Комиссарĕсен Совечĕ колхозсенче учотпа счетоводствă ĕçне мĕнле лартнине пăхса тухнă. Учотпа счетоводствă ĕçне тĕрĕс туса пыни колхозсене организацилпе хуçалăх йенчен çирĕплетес тĕлĕшпе тата колхозсенче тупăша тĕрĕс валеçессинче чи кирлĕ условисенчен пĕри пулать. ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче тата çĕрĕç органĕсенче сăтăрласа пурăннă халăх тăшманĕсем колхозри учотпа счетоводствă ĕçне пăтраштарса, аркатса йама тăрăшнă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ икĕ хутлă бухгалтери системи тăрăх туса пыракан счетоводствă йĕркине пысăк колхозсенче кăна тумала, ытти колхозсем валли счетоводствăн простой йĕркинех хăвармала, йышлă мар хуçалăхлă (30 хуçалăха çити) колхозсем валли счетоводствă йĕркине тата та çăмăлтарах майсемпе туса пымала тунă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи кинематографи ĕçĕсен Комитечĕн Положени пройектне пăхса тухса çирĕплетнĕ, çавăн пекех государствă, кооператив тата обществăллă учрежденисен, предприятисемпе организацисен работникĕсене ĕçукçине уйрăмшарăн парас ыйтăва пăхса тухса çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

А. Ф. БЛИДМАН ЙУЛТАША ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЙАЛАВ ОРДЕНĔПЕ НАГРАДАЛАССИ ÇИНЧЕН

Тыйăс-пуçтарас ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе калама çук чапăй пуçарулăх тунăшăн тата тыйăнĕ чухне ĕç тухăçлăхне хăпартнăшăн А. Ф. БЛИДМАН йулташа ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЙАЛАВ орденĕпе наградалас.

ССРС ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ
М. КАЛИНИН.

ССРС ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 ç. августăн 30-мĕшĕ.

Çессин ĕçĕсене тулли кăмăлпа ырлаççĕ

ЙĔПРЕÇ. ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессин ĕçĕсене савăтсемпе предприйатисенче, колхозсенче анлăн сÿтсе-йаваççĕ. Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе колхозницăсем тата йединоличниксем Çессин ĕçĕсене тулли кăмăлпа ырлаççĕ.

Çĕнĕ Чураш йалĕнчи йединоличниксемпе „Ударник", „Чувашия", „Хĕрлĕ партизан" колхозсенчи колхозниксен августăн 24-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухăвĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" йышăннине сÿтсе-йаврĕç, вăл саккуна колхозниксем пурте пĕр саслăн ырларĕç. Колхозниксемпе йединоличниксем йалхуçалăх налогĕпе страховкă, зайом укçисене срукчен тÿлесе татма 3-мĕш квартал финанс планне çентябĕрĕн 25-мĕшне тултарма йышăнчĕç.

Кунсăр пуçне йалсовечĕпе колхоз активĕсене çĕнĕ саккун çинчен колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарма уйрăм участкăсем çумне çирĕплетрĕç. Чылай колхозниксем ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕнче „ССР Сойузĕн 1938 çулхи пĕтĕм государствă бюджечĕ çинчен" тата „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" кăларнă саккунсене ăнлантарсан, 1938 çулхи йалхуçалăх налогĕ, страховкă тата зайом укçисене пĕтĕмĕшпех тÿлесе татаççĕ. „Чувашия" колхозра Васильйĕв, Никифорăв, „Ударник" колхозра Константинăв йулташсем налогпа страховкă укçисене пĕтĕмпех тÿлесе татрĕç. „Хĕрлĕ партизан" колхозра та укçа-тенкĕ пухас ĕç вăйлăланчĕ.

Кĕлĕмкассинчи „Хĕрлĕ фронтовик" колхозра та ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессин решенисене сÿтсе йавнă пухăва халăх нихăçанхинчен нумай пухăннă.

Дм. Михайлĕв.

„Йермак" пăрçĕмĕренĕн чаплă рейсĕ

1938 çулхи Арктикăри шывçулне уçса, „Йермак" пăрçĕмĕрен Франц-Иосиф Çĕре патне рейс туса, унта хĕл каçнă „Пролетарий", „Рошаль" тата „Русанов" карапсене илсе тухнă. Унтан „Йермак" Диксон утравĕн буйтинчен унта хĕл каçнă карапсен караванне илсе тухнă. Вăл рейса „Йермак" рекордла срукра—пилĕк талăк хушшинче ишсе тухнă. „Йермакăн" виççĕмĕш йывăр ĕçĕ Лаптевсен тинĕсĕнчи йăвăр пăрсем хушшинчен карапсен пысăк караванне илсе тухни пулнă. Çапла ĕнтĕ „Йермак" пăрсен тыткăнĕнчен 15 карап илсе тухнă.

Кун хыççăн „Йермак" тата çурçĕрелле, Пăрлă океанăн анлăхне, „Садко" пăрçĕмĕрен караванне çăлса кăларма тухса кайнă.

Августăн 23-мĕшĕнче „Иермак" тимлĕн ĕçленĕ хыççăн „Садко" караванĕ патне çитнĕ. Вăл кун „Седов" карапа буксира илсе „Иермак" кăнтăрала кайнă. Вĕсем хыççăн „Садко" тата „Малыгин" караванĕн ытти карапĕсем пыраççĕ. Пур карапсен командисем те сыва.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Стаханăвла йухăма йертсе пырасси çинчен партком çекретарĕсем мĕн калаççĕ

Стаханăвĕçсене — ответлă вырăнсене

(ПЕТРОВ — çыхăну çуртĕнчи партком çекретарĕ)

Çыхăну çуртĕнче чылай вăхăт хушши: „пирĕн ĕçре стаханăвла йухăма сарма май çук" текен çĕрĕк теори пулнă. Ку теорине çыхăну çуртĕнче ларнă халăх тăшманĕсем туртса кăларнă. Ку çĕрĕк теорине, практикă пăрахăçа кăларчĕ. Халĕхи вăхăтра çыхăну çуртĕнче 85 стаханăвĕç. Вĕсем ĕçре те, вĕренÿре те пример кăтартаççĕ. Котов почтаљйон 42 çул хушши производствăра ĕçлет. Вăл шутран Шупашкарти çыхăну çуртĕнче 40 çул хушши ĕçлет. Çак вăхăтра ун çинчен пĕр жалăбă та пулман. Вăл çырусене, телеграммăсене, хаçатсене вăхăтра тăрататť. Гуçков, Лебĕдĕв, Степанăвă стаханăвĕçсем те çавăн пекех лайăх ĕçлеççĕ. Ку стаханăвĕçсем хăйсем лайăх ĕçлеççĕ çеç мар, вĕсем производствă ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тĕрлĕ сĕнÿсем параççĕ. Телеграфра ĕçлекен Гуçков стаханăвĕç панă сĕнĕве пурнăçланипе телеграфра 10 пин тенкĕлĕх економи тунă.

Епĕр Хусанти çыхăну çурчĕпе ăмăртатпăр. Пĕр-пĕрин опычĕсемпе усă куратпăр. Ăмăрту доґăвăрне тĕрĕслене хыççăн, Шупашкарти çыхăну çурчĕ мала тухни палăрчĕ. Хусанти телефонисткăсем 50 абонентпа ĕçлеççĕ пулсан, пирĕн телефонисткăсем 100 абонентпа ĕçлесе ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Йулашки вăхăтра пуçламĕш парторганизаци те стаханăвĕçсемпе лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Уйăхра 3 хут стаханăвĕçсемпе пухусем иртеретпĕр. Докладчиксене те стаханăвĕçсенчен уйăратпăр. Стаханăвĕçсем валљи уйрăм шкул тунă. Ку шкулра 37 çын вĕренет. Кунсăр пуçне тата стаханăвĕçсене техникă ĕçне вĕрентме 16 кружок организациленĕ. Стаханăвĕçсем хăйсем те вĕренеççĕ, çынсене те вĕрентме тăрăшаççĕ. Телеграфра ĕçлекен Аниçимăв стаханăвĕç 10 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Стаханăвĕçсен лайăх опычĕсене ытти çынсене пама тăрăшатпăр. Ку тĕлĕшпе инструктăр-стаханăвĕç Лебĕдĕв ĕçлет. Ăна халĕ телеграфра бригадир туса хунă. Нумай пулмасť партине кĕчĕ.

Çыхăну çуртĕнче лайăх ĕçлекен стаханăвĕçсенчен 27 çынна йертсе пыракан вырăнсене ĕçлеме лартнă. Андрийанăвă телефонисткăна телефон станци начаљникĕ туса хунă. Самсонăв почтаљйона çыхăну пайĕн начаљникне лартнă. Вĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Пирĕн организацире инженерсемпе техниксем 70 çынна йахăн. Иртнĕ çулсенче вĕсем стаханăвла йухăма хутшăнман. Халĕ вĕсем стаханăвĕçсене ĕçре пулăшса пыраççĕ, вĕсене техникăна вĕренме пулăшаççĕ.

Çамрăксем техникăна вĕренеççĕ

(СУДАКОВ — çĕнĕ савăтри партком çекретарĕ)

Çĕнĕ савăтри парторганизацинче 80 коммунис ытла шутланса тăрать. Кунсăр пуçне тата 200 комсомолĕç. Çак çынсем стаханăвла йухăма пуçарса пыраççĕ. Çĕнĕ савăт строитĕлствинчи стаханăвĕçсем хăйсен ĕçĕсемпе пример кăтартаççĕ. Çĕр ĕçне ĕçлекен бригадă (бригадирĕ Гамилăв) ийуљ уйăхĕнче хăйĕн планне 178 процент, август уйăхĕнче 3 ерне хушшинче 154 процент тултарчĕ. Платниксен бригади (бригадирĕ Андрей Григорйĕв) плана 258 процент, Блохин бригади 190 процент, кĕпер тăвакан бригадă (бригадирĕ Кондин) — 211 процент, Денисăв бригади 205 процент тултарса пыраççĕ. Строитĕлствăри стаханăвла йухăма комсомолĕç-платниксен бригади (бригадирĕ Алексей Петров комсомолĕç) пуçарса йачĕ. Ку бригадă плана 150 процент тултарса пычĕ. Петров бригадин опытне урăх бригадăсене куçарнă хыççăн, ытти бригадăсем Петров йулташран та иртсе кайĕç. Социалисăмла ăмăрту пуçланчĕ. Ку ăмăртура коммунисcем пример кăтартаççĕ. Александрăв коммунист грузчик пулса ĕçлет, вăл хăйĕн планне 300 процент таран тултарать.

Строитĕлствăра çамрăксем нумай ĕçлеççĕ. Вĕсем савăтра вĕренсе квалификаци илме тăрăшаççĕ.

Çакна шута илсе, çамрăк рабочисене техникă ĕçне вĕрентме 11 кружок организацилерĕмĕр. Ку кружоксенче 350 çын вĕренет. Занљатисем пĕр кун сиктерсе пулса пыраççĕ. Халĕ каллех çĕнĕ кружоксем тăватпăр. Кружоксенче нумай çынсене вĕрентме шутлатпăр.

Пирĕн умра тăракан задачă, вăл — лайăх ĕçлекен стаханăвĕçсен опычĕсене сарса пырса, стаханăвла йухăма массăллă йухăм тăвасси пулать. Пирĕн уйрăм рабочисене, бригадăсене çеç мар, пĕтĕм савăта стаханăвла ĕçлемеле тумала.

Стаханăвла йухăма сарса пырас ĕçре рабочисен ĕçпе йăла условисене лайăхлатасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кунта çитменлĕхсем пирĕн чылайах-ха. Иванăвăри кирпĕч савăчĕ начар кирпĕч парать. Çитменнине тата кирпĕче шыва путарнă пирки 70 процент таран брак тухать. Савăт тунă çĕрте çутă çук. Халĕ куçса çÿрекен електростанцисем илсе пынă, анчах провăд çук пирки станцисем ĕçлемеççĕ. Шкул çук, хватерсем çитмеççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр халĕ епĕр. Социалисăмла ăмăртăва сарса пынипе строитĕлствă ĕçне палăртнă срукра туса пĕтерме тăрăшатпăр.

Чăрмавсене вăхăтра пĕтеретпĕр

(АЛЕКСАНДРĂВ — Шупашкарти кирпĕч савăтĕнчи парторг)

Шупашкарти кирпĕч савăтĕнче стаханăвĕçсен йышĕ кулленех ÿссе пырать. Каçалхи май уйăхĕнче стаханăвĕçсем 22 çын кăна пулнă пулсан, август уйăхĕ тĕлне стаханăвĕçсем 58 çынна çитрĕç. Çапла ĕнтĕ савăтра ĕçлекен 130 рабочирен 58 рабочи стаханăвĕç. Вĕсем ĕç планне кулленех 185—195 процент таран тултараççĕ.

Калайĕв, кирпĕч хĕртекен цехра ĕçлекен рабочи-стаханăвĕç, ĕç нормине йаланах 195 процент тултарса пычĕ. Ун ĕç пахалăхĕ те питĕ аван. Халь Калайĕв йулташа кирпĕч хĕртекен цехăн начаљникĕ пулса ĕçлеме илнĕ. Вăл унта ĕçлеме пуçланăранпа кирпĕч хĕртекен цех хăйĕн ĕçне аванлатрĕ. Унччен пĕр уйăх хушшинче 700.000 кирпĕч анчах хатĕрленĕ пулсан, халь пĕр мĕлйун кирпĕч хĕртсе кăларса пыратпăр. Кирпĕчсен пахалăхĕ те лайăхланчĕ. Мĕн пур кăларакан кирпĕчсенчен 80 проценчĕ пĕрремĕш сурт.

Калайĕв йулташ пекех, Куçмина тата ытти стаханăвĕçсем те ку цехра примерлă ĕçлесе пыраççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци стаханăвла йухăма татах та анлăн сарса йарассишĕн ĕçлет. Стаханăвĕçсемпе канашлусем иртерет, стаханăвĕçсем панă сĕнÿсем тăрăх савăт дирекцийĕпе пĕрле производствăри ĕçе йĕркелет. Акă, кирпĕч çапакан машинăна йусама уйрăм маçтăрсене çирĕплетмен пирки, машинăсене йусанă чухне обезличкă пулнă. Çакăн пек „йусанă" машинăсем тепĕр икĕ кунран татах ĕçе йурăхсăр пулнă.

Çак çитменлĕхсене стаханăвĕçсем кăтартса панă хыççăн, савăт дирекцийĕ машинăсене йусама уйрăм маçтăрсене çирĕплетрĕ. Халь пирĕн машинăсем пĕр чăрăнмасăр ĕçлеççĕ, маçтăрсем хăйсене çирĕплетсе панă машинăсене асту сах тăраççĕ, вăхăтра йусаса пыраççĕ. Кун пек туни, паллах, ĕç тухăçне хăпартма та нумай пулăшать.

Савăтра стаханăвла йухăма чăрмантарса пыракан çынсене парторганизаци вăхăтра тăрă шыв çине кăларса пырать. Ирхин маçтăр стаханăвла йухăма чăрмантарса пынă. Кирпĕч хĕртекен цехри стаханăвĕçсем ĕçленĕ вăхăтра вăл кирпĕч хĕртекен кăмакана (горнăна) вутă йурийĕх сахал панă, хĕрекен кирпĕч, вутă сахал пулнипе, сивĕнсе çуркаланнă, пăсăлнă. Çак цехра ĕçлекен стаханăвкă Куçмина йулташ Ирхинăн сăтăрла ĕçне хăвăртах палăртнă, дирекци Ирхина ĕçрен кăларса йанă.

Парторганизаци савăтра стаханăвла йухăма сарса йарассипе чылай пысăк ĕçсем тунă, анчах ку тĕлĕшпе тумалисем татах та питĕ нумай-ха. Стаханăвĕçсене вĕрентсе çитĕнтерсе пырассине çителĕклĕ таран организацилемен. Стаханăвĕçсем валљи организациленĕ икĕ çуллăх шкул хăйĕн ĕçне йĕркеленĕх тăваймасť. Занљатисем сайра хутра кăна пулса иртеççĕ.

Рабочисем хушшинче куљтмассăллă ĕçе те начар организациленĕ. Кунта, уйрăмăнах, профсойуз организаци начар ĕçленине палăртса хăвармала. Каçалхи апрел уйăхĕнчен август уйăхне çитиччен рабочисене профсойуз членĕсене пухса пĕр пуху та туса иртермен, профсойуз членĕн укçисене те пуçтарман.

Савăт дирекци йенчен те стаханăвла йухăма тивĕçлипе сарса йарас, стаханăвĕçсене кирлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлени куранмасť-ха. Рабочисене пурăнма, пайанхи куна çитсе те лайăх хватерсем тупса паман, çĕнĕ çуртсем лартассипе те дирекци ĕçлемест.

Патăрйелĕнчи педучилищăра

Ÿкерчĕк çинче: Педучилищă директăрĕ Соколов (сулахайра) вĕренме кĕме пынă Е. Паймина, М. Гаврилăвă, А. Митрофанăвă, Л. Табаковă йулташсемпе калаçать.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Професcăр И. А. Берзинь

Чăваш йалхуçалăх институчĕн директăрĕ

ТЕЛЕЙЛĔ СОВЕТ ÇАМРĂКĔСЕНЕ — САЛАМ!

Пайан — çĕнĕ вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕ. Çĕршер пин совет çамрăкĕсен калама çук пысăк çăрĕ пайантан шкула пуçтарăнса, Владимир Илйич Ленин „вĕренмеле, вĕренмеле татах та вĕренмеле" тесе хушса хăварнине малала пурнăçлама пуçлать. Чăнах та, пирĕн вĕренес текене кашнинех Сталинла Конституци тăрăх права панă. Ку правапа çамрăксем анлăн усă кураççĕ. Пирĕн çĕршывра шкул строитĕлстви калама çук пысăк вырăнта пулин те, шкулсенче вĕренекенсем час-часах тăптулли пулаççĕ. Çакă вăл Совет Сойузĕнче халăха вĕрентес ĕç тата пĕтĕм куљтурă пысăккăн ÿснине кăтартса парать. Тĕслĕхе Шупашкар хулинех илĕпĕр. Ăçта пăхнă унта халь нумай пулмасť туса лартнă калама çук лайăх çĕнĕ шкулсем куратăн. Шкулсенче вĕрентекен наукăн содержанийĕ ĕлекхипе танлаштарсан, палламала мар улшăнчĕ. Халĕ шкулсенче çамрăксем малта тăракан наукăн çитĕнĕвĕсемпе паллашаççĕ.

Мĕнле пулнă-ха Совет влаçĕ пуличчен? Пĕрремĕш вырăнта ухмахла „ăслăлăхсем" — закон божий, тата тĕрлĕрен катехизиссем тăнă. Малала пупсен чиркÿ историйĕсем тата çветуй Макарисемпе Микула Чудотворĕçсем çинчен калакан тĕрлĕ баçнисем кайаççĕ. Йулашкинчен, турра кĕлтумали пур йĕркесене те пĕтĕмĕшпех вĕренмеле пулнă. Чиркĕве çÿреме хушнă, высăпа асаплантарнă — çакна вара говет туни, тенĕ. Кам та пулин ку йĕркесене пăхăнмасан, шкултан кăларса йанă. Шкулсенче пур çĕрте те пупсем хуçа пулнă. Аслă шкулсенче те чи малтанхи предмет — турра кĕлтăвасси пулнă.

Кам-та кам „богословипе" екзамĕн тытайман, вăл малала вĕренме те пултарайман çеç мар, часах политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăррисен спискине лекнĕ, вара ăна „ирĕк шухăшлă" пулнăшăн полици йĕрленĕ. Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче вăл вăхăтри прогрессивлă кирек мĕнле хаçатсене те вулаттарман, вĕренекенсем нимĕнле хаçат та ан вулаччăр тесе, пур майсене те туса пынă. Хаçат вулакана „ирĕк шухăшлă" тенĕ. Çавăнпа çамрăксем пурнăçри политикăлă ыйтусене йапăх ăнланнинчен тата вĕсем аслă шкулсенчен вĕренсе тухсан та çав ыйтусемпе нимĕн ăнланайми тĕттĕм йулнинчен тĕлĕнмели çук. Шкулсенче полици режимĕ пулнă: пĕчĕк айăпшăнах карцере хупнă, унта ларакансене шывсăр, çăкăрсăр пурнăçне урăх нимĕн те паман. Карцĕрсем хăшпĕр аслă шкулсем çумĕнче те пулнă.

Телейлĕ пирĕн халљхи çамрăксем, вĕсемшĕн халь çамрăксене пăвакан, ăслăлăхпа етемрен мăшкăласа кулакан шкулсем çук. Патша Роççийĕнчи çамрăксемпе Совет çĕршывĕнчи çамрăксен йуррисене танлаштарса пăхни интереслĕ. Патша Роççийĕнчи çамрăксем тĕрме çинчен, тĕксĕмĕн куранакан малашлăх çинчен хуйхăлă йурăсем йурланă. Ĕлекхи студентсен йуратнă йуррисем: „Солнце всходит и заходит, а в моей тюрьме темно"... йе „Назови мне такую обитель,... где бы русский мужик не стонал", 1905 мĕш çулхи револљуци хыççăнхи реакци вăхăтĕнче „..Быстры как волны, дни нашей жизни", „Посуди, посуди что нам будет впереди?!.. Час-часах йурă çак сăмахсемпе таталнă: „с вином похоронят и пьяным попом". Çавăн пек хуйхăлă та шанăçсăр йанранă патша Роççийĕнчи çамрăксен йуррисем. Итлĕр-ха, мĕн çинчен тата йепле йурлаççĕ халљхи çамрăксем..., „Я другой такой страны не знаю, где так вольно дышит человек" йе „Шагай вперед, комсомольское племя, шути и пой, чтоб улыбки цвели!" „Мы покоряем пространство и время, мы молодые хозяева земли!"

Чăнах, совет çамрăкĕсем — тĕнчере пĕртен пĕр чи телейлĕ, аслă та ирĕк çĕршывăн хуçи пулнă çамрăксем. Çавăнпа епĕр пайан, çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă йатпа хамăр çамрăксене хĕрÿлĕн саламлатпăр. Вĕренĕр! Чи малта тăракан ăслăлăхăн тÿпине алла çавăрса илĕр. Пирĕн аслă учитĕл Сталин йулташ: „пуласлăх ăслăлăхри çамрăксен аллинче" тенине асра тытăр. Çавăнпа епĕр уйрăмăнах хамăрăн аслă шкулсенчи çамрăксене саламлатпăр. Пайан çĕнĕрен вĕсен аудиторийĕсем тăп-тулли. Чăнахах та ытлашшипех тулли. Тĕслĕхрен, Чăвашсен йалхуçалăх институчĕн Мускавран телеграф тăрăх çĕнĕрен вĕренме илекенсен шутне ÿстерессн çинчен ыйтмала пулчĕ. Мĕншĕн тесен екзамĕн тытнисем вĕренме илмели ачасен хисепĕнчен ытларах.

Çакăн пек çамрăксем ăслăлăх йеннеле туртăнни. Тĕрĕс калать поет: „Молодым везде у нас дорога, — старикам везде у нас почет".

Вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул çĕнĕ вĕревÿ çулне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ. Шкулта 16 клас. Классене илемлетнĕ. Кунта мĕн пурĕ 540 ача вĕренет. Кăçал çĕнĕрен 83 ача илнĕ. Вĕренекен ачасен спискине куранмала çĕре кăларса çакнă.

С. Константинăв.

Именкассинчи (Трак р.) вăтам шкул вĕревÿ çулне вур йенчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илчĕ. Шкул директăрĕ И. Александрăв ку тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕ.

Шкула августăн 15-мĕшкех йусаса пĕтернĕ. Çĕнĕрен 35 парта тутарнă. Кашни ача пуçне 10 шар тетрать тата кĕнекесем чылай илнĕ. Вутă та çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Вик. Дмитрийĕв.

1-мĕш класри ачасене хитре те тĕрĕс çырма вĕрентрĕм

Епĕ вĕрентекен класра 39 ачаччĕ. Ачасем шкула чи малтанхи хут пуçтарăнсан, епĕ вĕсене пысăкăшне кура уйăрса лартрăм: пысăкраххисене кайри партăсем çине, пĕчĕкрĕххисене маларах тата начартарах куракканнисемпе начартарах илтекеннисене чи малти партăсем çине. Кашни ачанах пĕрер вырăн уйăрса патăм та, çирĕппĕн çапла каларăм: учителрен ыйтмасăр харпăрхăй вырăнĕнчен урăх вырăна куçса ларма йурамасť. Партăсем йаланах таса пулмала, ун çинче ытлашши йапаласем тытма йурамасť. Киле кайнă чухне вĕсене хупса хăвармала.

Организацилĕ навыксемпе дисциплинăлăха малтанах хăнăхтарни шкулта пысăк çитĕнÿсем тума май парине шута илсе, ачасене епĕ хам калаçисене пурнăçласа пыма хушрăм.

Малтанхи уйăхра епĕр кăранташпа çыртăмăр. Çак вăхăтра уйрăмăнах хыттăн çавăрăнса пăхмала. Тетраťсемпе кăранташсем валеççе парсанах, епĕ ачасене вĕсемпе мĕнле усă курасси çинчен тата çырнă чух мĕнле лармали çинчен тĕплĕн ăнлантарса патăм. Çыру урокне епĕ акă мĕнле сăмахсемпе пуçларăм: тÿрĕ ларăр, урăрсене партăн пусмалисем çине хурăр. Кун хыççăн хăм хушшине ачасем тĕрĕс тунипе туманнине тĕрĕслесе тухатăп. „Тетраťсене хăвăр умăра йăлтах сулахай кĕтесĕсене кăкăр тĕлне туса хурăр. Халь ĕнтĕ кăранташсене висĕ пÿрнепе (пуç пÿрне, шĕвĕр пÿрне тата варĕнчи пÿрнепе) тытăр та, кăштах упражненисем тăвăпăр". Хам кăранташа çÿле çĕклетĕп те: „çырнă чух кăранташ варĕнчи пÿрне çинче выртмала, ăна шĕвĕр тата пысăк пÿрнепе хĕстерсе тытмала. Шĕвĕр пÿрне кăранташ çине ирĕклĕн анса хăпарма пултартăр. Пÿрнесене хутлатса хума йурамасť".

Çакăн хыççăн упражненисем тăватпăр. Кунта акă мĕне хăнăхтармала: ачасем шĕвĕр пÿрнене çĕклентерсен те кăранташ алăран ан ÿктĕр, йе тата пÿрнесем ан хутланччăр.

Кун хыççăн акă мĕн çинчен ăнлантаратăп: „алăсене чавса таран партта çине хурăр. Сулахай алăпа тетрате тытăр, сылтăммипе çырмали вырăна кăранташпа тĕлме тĕл туса тытăр. Халь ĕнтĕ сÿлтен айалала йĕр туса çырнă чух шĕвĕр пÿрнепе кăранташ çине пусмала (кунта кăтарту мĕн çырнине кура пулма пултарать).

Кунсăр пуçне тата уйрăмăнах кăранташăн тепĕр вĕçĕ сылтăм хулпуççи тĕлĕнче пулмаллине хытă асăрхамала. Халь ĕнтĕ çырма пуçларăмăр. Çырасси шут тăрăх пулса пырать. Калаçса ăнлантарнă правилăсене пурне те тунă пулсан, ачасен çырнă чух пÿрнепе пусасси тĕрĕс пулса пырать, анчах нумайĕшĕ графа патне çитереймеççĕ, йе урлă каçарса йăраççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ тетрате графаланни мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен ачасене тĕплĕн ăнлантарса памала.

Кашни çĕнĕ елемента, йе саспаллине шут тăрăх икë вĕçĕ хутчен çыртаратăп. Унтан кашни ача ĕçнех тĕрĕслесе тухатăп, çитменлĕхсем пулсан, вĕсене мĕнле тÿрлетесси çинчен çийĕнчех каласа ăнлантаратăп.

Çапла вара малтанхи кашни çыру урокĕнчех пĕр йеверлĕ ыйтусем: кăранташа тĕрĕс тытасси, çырнă чух тĕрĕс ларасси, кашни хăй çырнине йуратма хăнăхтарасси пулса тăрать.

Малтанах епĕр çакăн пек упражненисем çыртăмăр: П, Т, тата Г саспаллисен елеменчĕсене тата тĕрлĕ линисенчен тăракан йапаласен кĕлеткисене ÿкертĕмĕр. Ку упражненисем пÿрне шăнăрĕсене çирĕплетеççĕ. Кăранташпа çырма вĕрентме вăхăтра кăранташсене лайăх шĕвĕртнине асăрхасах тăмала.

Октйабĕрĕн пуçламĕшĕнче епĕр чернилăпа çырма пуçларăмăр. Халь ĕнтĕ ачасем çырнă чух мĕнле лармалине тата тетраťсене хумалли правилăсене пĕлеççĕ. Апла пулин те, кашни урокрах вăл правилăсене тĕрĕслессинчен пуçлатăп, йăнăшсем пулсан тÿрлететĕп. Чи малтанах ручкăпа перопа мĕнле çырассине хăнăхтарасси, перо тасатмалипе тата чернилăпа мĕнле усă курасси пысăк ĕç пулса тăрать.

Тетраťсене епĕ малтанхи кунах чалăшла графаласа хатĕрлетĕп. Ку ачасемшĕн тĕрĕс çырма вĕренессине çăмăллатать, графасем тăрăх чалăшла çырма, саспаллисем хушшисене пĕр пек хăварса çырма пулăшать.

Ручкăна алла илсенех ачасене акă мĕн асăрхаттаратăп: пÿрнесемпе перона çывăх ан тытăр, çывăх тытсан пÿрнесем варланаççĕ. Перона графа çине лартăр та ун, тăрăх айалала антарăр. Хытăрах пусăр. Халь ĕнтĕ пăхăр-ха, перо икĕ йĕр тăвать. Ытла хытă пуссассăн йĕр висĕçĕр сарлака пулать. Кун пек çырни тĕрĕс мар. Кăшт çеç пуссассăн сирĕн питĕ çинçе йĕрсем пулаççĕ, ытла çинçе çырни те тĕрĕс мар.

Малала упражненисем пулаççĕ. Кунта епĕ акă мĕн çинчен ăнлантаратăп: „Перона хăйаккăн тытма йурамасť, апла тусан вăл хута чĕрмелет, çавăнпа та ăна тÿрĕ тытмала. Перо вĕçне мĕн те пулин çыпăççан, ăна тасатмалипе тасатăр. Чернила ытлашши нумай ан пусăр. Малтан перона чернилă çине чикмесĕрех упражненисем тăвăпăр. Халь ĕнтĕ перона чернилă çине чикĕр. Çырма пуçлăпăр. Пусса йе пусмасăр темиçе патак çырăпăр". Малтанхи упражнени урокĕсем саспалли елеменчĕсене çырнипе иртеççĕ. Кунта çак правилăсене тĕрĕс тытса пынине асăрхамала: перона графа тăрăх айалала антарнă чух хытăрах пусмала, хăпартнă чух пусмала мар.

Ачасем саспалли елеменчĕсене çырма вĕренинĕ хыççăн епĕр саспаллисем çырма пуçлатпăр. Малтанлăха çыракан саспаллисем нумай мар елементлă. Ачасем çав елементсене тĕрĕс те лайăх çырма вĕренсен малала пур саспаллисемпе сăмахсене те çырма пултараççĕ.

Çак вăхăтра епĕ кĕтеслĕ саспаллисем ан пулччăр, тесе тимлĕн асăрхатăп.

Б. Соснин „А" па „Г" саспаллисене шĕвĕр кĕтеслĕ „çавăрттарса" çырнă. Уйпала уйрăмах, темиçе упражнени тумала пулчĕ. Соснин кун хыççăн тĕрĕс çырма вĕренчĕ.

Кашни урок пуçламăшĕнчех çырнă чух мĕнле правилăсем пĕлмеллине виç-тăватă минут хушши астутаратăп тата ачасем тунă каллиграфи йăнăшĕсене асăрхаттаратăп.

Тĕрĕс мар çырнă саспаллисене епĕ доска çине ÿкерсе илетĕп те, ачасене кунти йăнăша тупма сĕнетĕп. Унтан вара мĕнле тĕрĕс çырмаллине кăтартса паратăп. Ачасем кăна хăйсен тетрачĕсем çине çырса илеççĕ. Тетраťсен графисем мĕнле, доскана та çавăн пекех графалатăп. Ку ачасене питĕ нумай пулăшать. Доска çинче епĕ йаланах саспаллине ăçтан çырма тытăнса ăçтан пĕтермеллине, ăçта çавăрса çырмаллине, ăçта пусмаллине тата пĕр саспаллипе теприне мĕнле çыхăнтармаллине кăтартса хитре те шултăра çыратăп. Çакăн хыççăн тин вара ачасем хăйсен тетрачĕсем çине çыраççĕ.

Килте епĕ кашни ĕçех тĕплĕн тĕрĕслетĕп. Йăнăшсене тÿрлететĕп. Мĕнле çырмаллине кăтартса паратăп, çырнă ĕçе тивĕçлĕ хак паратăп. Вĕренекен ача халичченхинчен лайăхрах çырнă пулсан, ăна хĕпĕртеттерме: „лайăх çырнă, тăрăш Борька", тесе çыратăп. Ытла хытăрах пусса çырнă пулсан „хытă ан пус", йе çинçе çырнă пулсан „кăшт хытăрах пусса çыр", тесе асăрхаттаратăп. Çапла паллă тунине ачасем лайăх йышăнаççĕ, йăнăша хăвăрт тÿрлетеççĕ. Учитĕл тетраťсене тирпейлĕ те вăхăтра тĕрĕслени ачасемшĕн пример пулса тăрать.

Епĕ уйрăм чистописани урокĕсем те туса иртерне. Чистописани урокĕнче епĕр заглавный саспаллисемпе тата алфавитри йăвăртарах саспаллисене çырма вĕренеттĕмĕр. Чистописани урокĕсем тĕлне епĕ уйрăм плакатсем çырса хатĕрлетĕп. Плакатра пĕр-пĕр саспалли елементне йĕркипе ÿкернĕ, кайарахри йĕркинче саспаллисем пулаççĕ. Урокра епĕ ачасен йăнăшĕсене тĕплĕн асăрхаса тăрса вĕсене çийĕнчех тÿрлететĕп. Ку урокcенче епĕр 4 строкăран ытларах çеç çыратпăр.

Саспаллисене тĕрĕс пусса хитре çырни, вĕсене пĕр пĕрипе йĕркелĕ çыхăнтарма пĕлни, саспаллисемпе сăмахсен хушшине пĕр пек çырма хăнăхтарни ачасен çырăвне илемлетет. Ман класра вĕренекен ачасен нумайĕшĕн каллиграфи питĕ аван. Анчах çыру куљтурине хăпартас тĕлĕшпе манăн çитес вĕренÿ çулĕнче татах нумай ĕçлемеле пулать ха.

Кашни шкулăн, кашни учителĕн ачасене хитре те ăнланмала çырма вĕрентессишĕн тăрăшмала. Класри йĕркелĕх, çыру ĕçĕсен правилисене ним пăркаланмасăр тĕрĕс пурнăçлани тетраťсене вăхăтра, тăса та тирпейлĕ тĕрĕслени — акă мĕн пулса тăрать ачасене лайăх çырма вĕрентесси патне илсе пыракан çул.

И. Сапожникăв.

ПРИЗЫВА ТĂРАКАН ÇАМРĂК ПАТРИОТСЕНЕ БОЛЬШЕВИКЛА САЛАМ!

Пайан призыв пуçланать

Пайан, çентаберĕн 1-мĕшĕнче, пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар ретне красноармейĕцсем илес тĕлĕшпе призыв комиссисем ĕçleme тытăнаççĕ. Призыв пункчĕсене вальли районсемпе хуласенче чи лайăх клубсем, çуртсем уйăрнă. Пирĕн çĕршыври кашни ĕçсынни çак куна пысăк праçнике кĕтнĕ пек кĕтсе илет. Хăшĕ телейлĕ ывăлне, хăшĕ пиччĕшне, хăшĕ упăшкине призыв комиссине ăсатать. Хапрăксемпе савăтсенчен плана тултарассишĕн, стахановла ĕçшĕн, телейлĕ те культурăлă тата пуйан пурнăçшăн, халăхăн телейлĕ пурнăçĕшĕн кĕрешсе ӳснĕ çамрăк призывниксене бригадăри йулташĕсем ăсатса йараççĕ. Вĕсем пурте хаваслă. Уйрăмăнах Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар ретне йурăхлă пулнисем, Хĕрлĕ Çар ретĕнче коммунисăмшăн кĕрешме тивĕç илнисем телейлĕ. Хавасланма та тивĕçлĕ. Кашни хапрăк, савăт, колхоз Хĕрлĕ Çар ретне социалисăмшăн активлăн кĕрешекене, партипе совет влаçĕн шанчăклă ывăлне ăсатать.

Призыв кунĕ—пирĕн çамрăксен пурнăçĕнчи телейлĕ кун. Çак кун вăл тахçантанпа кĕтнĕ ĕмĕте—пирĕн анлă тăван çĕршыва сыхлама алла хĕçпăшал тытас ĕмĕте пурнăçа кĕртет. Районпа район, вĕренӳ пункчĕпе вĕренӳ пункчĕ ăмăртса ĕçленипе призывниксем пайанхи куна пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç. Вĕсем пурте 120 сехетлĕ программă тăрăх çар ĕçне вĕренсе тухнă. Кунсăр пуçне призывниксенчен 20 процент пысăклатнă программă тăрăх вĕреннĕ. 2460 çын хут сахал пĕлекен тата хут пĕлменнисен шкулĕсенчен вĕренсе тухнă. 1507 çын трахомран сывалнă. Мĕн пур призывниксенчен 17,4 процент „Ворошиловский стрелок“, 26 процент „ГТО“, 25,3 процент „ГСО“ тата 30 процент „ПВХО“ значокĕсене илнĕ.

Гамарникла-тухачевскиле шпионла бандăна çапса çĕмĕрнĕ хыççăн тата Йапони самурайĕсем Инçет-Хĕвелтухăç чикки çине тапăннă чухне Инçет-Хĕвелтухăç фронтĕнчи мухтавлă пограничниксем вĕсене çапса çĕмĕрсен, пирĕн çĕршыври çамрăк ачасемпе хĕрсен патриотисăмла çĕкленĕвĕ ӳссе кайрĕ.

Çамрăксем Хĕрлĕ Çара срукчен малтан кайма зайавленисем параççĕ. Зайавлени тăрăх мĕнле ответ панине ыйтса пĕлме хăйсем çар комиссариатне килсе пăхаççĕ. Хĕрлĕ Çара илме ыйтса хĕрсем те килеççĕ! Шупашкарти çыхăну çуртĕнче ĕçлекен хĕрсем виççĕн икĕ хут та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çара илме килсе ыйтрĕç. Хĕрлĕ Çара илменшĕн вĕсем икĕ хутчен те кăмăлсăр пулса карĕç. Çĕнĕ савăтра ĕçлекен çамрăк рабочи-стахановĕц Калинин Константин Васильĕвич хăйĕн зайавленинче çапла çырать:

„Епĕ 1920 çулта Елĕк районĕнчи Пизенер йалсоветĕнчи Анаткас йалĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Комсомола 1937 çулта кĕнĕ. 1938 çулта çĕнĕ савăт тума килтĕм. Кулленхи ĕç нормине 200—300 процент тултарса пыратăп. Халĕ епĕ хам ирĕкпе никам çĕнтерейми çирĕп Хĕрлĕ Çара кайасшăн. Капиталисла государствăсем пирĕн çине кирек хăçан та тапăнма пултараççĕ. Епĕ хамăн вăй хал, ăс-тăн çитнĕ таран хамăрăн çĕршыв оборонин тĕрекне, Хĕрлĕ Çар тĕрекне ӳстерме, çирĕплетме сăмах паратăп. Епĕ сиртен мана Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтатăп“.

Калинин йулташа, хамăр çĕршывăн çавăн пек хĕрӳлĕ патриочĕсене, кирек хăш фронтра та, кирек хăш вăхăтра та кĕрешӳве тухма хатĕр тăракан çамрăксене ыттисене те—Хĕрлĕ Çара илме пултараймастпăр,—тесе ответлеме тивет. Мĕншĕн тесен епĕр 1917 çулта тата 1918 çулăн пирвайхи çур çулĕсенче çуралнă, Хĕрлĕ Çара кайма ĕмĕтленекен çамрăксене те пурне те Хĕрлĕ Çар ретне вырнаçтарса çитерейместпĕр, чылайĕшне çар тулашĕнчех вĕренме хăварма тивет.

Есĕр, çамрăк патриотсем, çар ĕçне Осоавиахим организацисенче лайăххăн вĕренĕр, çирĕплетĕр вăл организацине. Тăшмана кирек ăçта та, кирек хăш вăхăтра та паллама вĕренĕр. Пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи красноармейĕцсем пек тĕл пеме вĕренĕр.

Пирĕн коммуниссен партипе совет правительстви тата Оборонă Халăх Комиссарĕ, Совет Сойузĕн пĕррĕмĕш маршалĕ Ворошилăв йулташ пирĕн ума Хĕрлĕ Çар ретне çирĕп сывлăхлă, хутла пĕлекен, политикăна йенчен шанчăклă çынсене парасси çинчен задачă лартрĕ. Ку ĕнтĕ вырăнти çар управленисене, призыв комиссисене, вырăнти партипе комсомол, совет организацисене кашни уйрăм призывникшăн, вăл призыв пунктне пынă кунран пуçласа ăна Хĕрлĕ Çара ăсатиччenех уншăн тăрăшмалине пĕлтерет.

Призывниксемпе сыхăнăва çирĕплетмеле, Хĕрлĕ Çара кайсан та вĕсемпе йаланах çыхăну тытса тăмала, социалисăмлă ăмăрту догăварĕсем тумала. Догăварсем пурнăçа кĕрсе пынине йаланах çар пайĕнчи командирсем урла, уйрăм делегаци йарса та тĕрĕслесе тăмала.

Пирĕн призывниксем çар техникине йуратса вĕренчĕр. Тăван çĕршыв çине, халăхсен ирĕклĕхĕ çине тăшман тапăнсан, Хĕрлĕ Çар тивĕçлĕ отпор парĕ, Хĕрлĕ Çар хыçĕнче 170 мĕлйунлă совет халăхĕ тăнине пирĕн красноармейĕцсем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Вилнĕ пиччĕшне шăлнĕ улăштарать, йулташĕ вырăнне йулташĕ тăрать.

Пĕтĕм совет халăхĕ Сталин йулташăн харăс, алла винтовкăсем тытса броньă хӳттипе çĕршыв чиккине сыхлаcа тăрĕ. Çĕр çинче те, пĕлĕт çинче те моторсем шавлĕç. Ун чухне вара пирĕн çине тапăнакансемшĕн çĕç мар, вĕсене ĕшкĕртекенсемшĕн те хăрушлăх тухса тăрĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар ирĕклĕ халăхăн мирлĕ ĕçне тата телейлĕ пурнăçне сыхлать. Пирĕн Хĕрлĕ Çар пусмăрта пурăнакан пĕтĕм ĕçсыннисене мĕнле ирĕке тухмалине кăтартать.

ЧАССР Çар Комиссарĕ—
капитан Илакин.

Призывник - стахановĕцсем

Шупашкарти спирт савăтĕнчен кăçал призыва кĕрекен çамрăксем пурте ударниксемпе стахановĕцсем. Призывниксем Хĕрлĕ Çар ретне илсен Инçет-Хĕвелтухăç чиккинче, танк çинче, çар карапĕсем çинче, сывлăш флотĕнче пулма ĕмĕтленеççĕ. Призывник Герман Андрейĕв йулташ Инçет-Хĕвелтухăç чиккинче пограничник пулма, Иван Çмелов йулташ танкис пулма ĕмĕтленеççĕ.

Иван Çмелов йулташ савăра 1935 çултанпа ĕçлет. Малтанах вăл йешчĕксем çинче кĕленчесем тийенĕ çĕрте вагонеткăпа, унтан тимĕрçре ĕçленĕ. Çак хушăрах производствăран таталмасăр мотористсен Атăл параходстви иртерн̆ĕ 2 уйăхлăх курсĕнче вĕреннĕ. Атăл шывĕ çинче моторкăпа çӳренĕ, спирт турттарнă. Йулашкинчен хăй ыйтнипе каллех спирт савăтне механически цеха 5-мĕш разрйадпа механик пулса ĕçleme кусна. Савăтра малтан вăл уйăхне 100 тенкĕ ĕçукçи илнĕ. Халĕ кулленхи ĕç нормине 120—130 процентшер тултарса пырать, уйăхсеренех 400—450 тенкĕ ĕçукçи илет. Вăл общĕствăлă ĕçсене те активлăн хутшăнать. Савăтри рабочисене оборонă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе те тăрăшать.

Призыв умĕнхи вĕренӳре лайăх паллăпа вĕренсе тухнă. ГСО, ПВХО нормисене парса значоксем илчĕ. 1934 çултанпа комсомолта тăрать, политкружоксене çӳресе пĕлӳлĕхне ӳстерет.

Призыва кайма повесткă илсен, вăл çапла каласа пачĕ:

— Епĕ Хĕрлĕ Çар ретне илме призыв пуçланасса тулли кăмăлпа кĕтрĕм. Хальхи призыв—вăл пĕтĕм халăх праçникĕ. Манăн пĕчĕкренех атте-аннесĕр, тăлăххăн ӳсмеле пулчĕ. Çапах та халĕ епĕ савăнăçлă. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташпа коммуниссен партийĕ пире, тăлăхсене, лайăх пăхса вĕрентсе ӳстерчĕ. Епĕр савăтри пур призывниксем те, призыв умĕн пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлерĕмĕр. Епĕ хам ĕçлекен механически цехри слесăр призывник Андрейĕв йулташпа ăмăртса ĕçлетĕп. Ăмăртса ĕçлесе иксĕмĕр те хамăр çине илнĕ обйазательствăна ăнăçлăн пурнăçларăмăр. Хĕрлĕ Çар ретне кайсан та епĕр социалисăмлă ăмăртатпăр.

Призывник Герман Андрейĕв призыва кайма лайăх хатĕрленчĕ. Призыв умĕнхи вĕренӳре „отлично“ вĕренчĕ Производствă планне йаланах 120—125 процентшер тултарса пычĕ.

Савăтра кăçал призыва кĕрекенсенчен 75 процентĕ оборонă значокĕсен нормисене панă. Хута сахал пĕлекенсем пуçламĕш шкул программипе вĕреннĕ.

В. Васильĕв.

Çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç

Пизĕп йалсоветĕнчи (Елĕк районĕ) призывник Артемий Кириллăв призыв кунне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ. Вăл çулйĕр уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет. Елĕкпе Йетĕрне хушшинчи çулăн йалсовечĕ çумне çирĕплетнĕ участкине йаланах лайăх тытса тăрать. Çул çине хăйăр турттарса кăларас плана ытлашшипех пурнăçлана. Иртнĕ хĕлле вăл 120 сехетлĕ программă тăрăх çар ĕçне „отлично“ паллăпа вĕренсе тухрĕ. Çар ĕçне вĕренмели пунктран таврăнсан колхозри Осоавиахим ĕçне лайăхлатма тытăнчĕ. Хĕрлĕ Çара вăл инженерла чаçа кайасшăн.

А. Софронăв.

Мускав хулинчи специальнăй шкулсенче вĕренекенсем лагĕрсенче.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Дивизи комиссарĕ—орденоносĕц В. С. Степанăв хăйĕн ывăлĕпе лагĕрти пурнăç çинчен калаçать.
Н. Гакăв фото ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

Тăван çĕршыва сисĕмлĕн сыхлама пулатпăр

Шупашкарти 1-мĕш номĕрлĕ типографинчи призывниксем Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн маршалĕ Ворошилăв йулташ 1917—18 çулта çуралнă çамрăксене черетлĕ призыва кĕртесси çинчен кăларнă приказа пысăк хавасланăхпа кĕтсе илчĕç.

— Епĕр çак çитес кунсенчех Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне кайса хисеплĕ йат, красноармейĕц йатне илетпĕр. Ку ĕнтĕ маншăн нихăçан пулман савăнăç. Красноармейĕц йатне епĕ социалисăмлă тăван çĕршыври ĕççыннисен мирлĕ пурнăçне вичкĕн сыхланипе тытса пыратăп,—терĕ черетлĕ призыв çинчен кăларнă приказа вуласан призывник Кузнецов йулташ.

Тимофейăв йулташ та:

— Тăван çĕршыва сыхласси—пысăк ĕç, савăнăç. Епĕ Хĕрлĕ Çар ретне кайсан танк командирне вĕренесшĕн. Командира вĕренсе тухса йаланлăха Хĕрлĕ Çара йулма шутлатăп,—тет.

Типографинчи призывниксем çар ĕçне лайăх паллăсемпе вĕреннĕ. Петровна Тимофейăв йулташсем ПВХО, „Ворошиловский стрелок“ значок нормисене панă. Призывниксем кашнийех ĕç нормине ытлашшипех тултараççĕ. Петровпа Кузнецов йулташсем иртнĕ уйăхра набор тăвас нормăна 115 процент тултарнă. Типографинчи çамрăксенчен 9 çын призыва кĕреççĕ. Вĕсем пурте хут пĕлеççĕ.

С. К-в

Призыв кунне хавасланă кĕтсе илчĕç

Шупашкар районĕнчен кăçалхи призыва хут пĕлекен, çирĕп сывлăхлă, пур йенчен те пултарулă çамрăксем кĕреççĕ. Çулталăк хушшинче хут сахал пĕлекен 120 призывнике тата хут пĕлмен 7 призывнике шкулсенче вĕрентсе кăларнă.

Хĕрлĕ Çар ретне тĕрлĕрен професçине вĕреннĕ çамрăксем кайаççĕ. Призывниксем хушшинче 13 тракторист, 2 шофĕр, 1 пилот (производствăран уйрăлмасăр вĕреннĕскĕр) шутланать.

Верховнăй Советсен суйлав кампани вăхăтĕнче призывниксенчен чылайăшĕ участкăри суйлав комиссийĕ членĕсем, агитатăрсем пулса ĕçленĕ. Шуркка йалсоветĕнчи колхоз счотоводĕ Сорокин активлă призывниксенчен пĕри. Вăл агитаци ĕçне халĕ те лайăх туса пырать.

Призывниксенчен нумайăшĕ лайăх физкультурниксем шутланаççĕ. Вĕсем чылайĕшĕ оборонă значоксен нормисене панă. 120 çын „ГТО“, 128 çын „ГСО“, 126 çын „ПВХО“ тата 59 çын „Ворошиловский стрелок“ значокĕсене илнĕ.

Призывниксем призыв кунне хаваслăн кĕтсе илчĕç. Кашнийех мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăма йурăхлă пуласшăн. Çара кайма çул çитменнисем те Хĕрлĕ Çар ретне кайасшăн зайавленисем параççĕ. Йаламкассинчи В. Иванов райĕçтăвкомăн çар пайне çакăн пек ыйту çырса панă:

„Епĕ 1919 çулта çуралнă. Манăн пичче Хĕрлĕ Çар ретĕнче пурăнать. Вăл киле çыру йанă чухне пĕрмайах Хĕрлĕ Çарти пурнăçа мухтаса çырать. Çавăнпа манăн та çара кайас килет“.

Кун пек тĕслĕхсем пĕрре кăна мар. Шупашкар районĕнчи призывниксем Хĕрлĕ Çара кайма пысăк хаваслăхпа хатĕрленчĕç.

Т. Майорăв.

Пирĕн ĕмĕтсем

Тойкилт йалсоветĕнчи (Тутаркас р.) призывниксем призыв кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç. П. Охторкин, Ал. Баладĕв, П. Никитин йулташсем призыв умĕнхи вĕренӳрен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. Хăйсен политикăлă пĕлĕвĕсене ӳстерчĕç, комсомол ретне кĕчĕç. Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн маршалĕ Ворошилăв йулташ черетлĕ призыв çинчен кăларнă приказа пĕрле пухăнса сӳтсе йаврĕç.

Призывниксен пурин те пĕр ĕмĕт—Хĕрлĕ Çар ретне кайма йурăхлă пуласси. Вĕсем кашнийех Инçет-Хĕвелтухăç чиккинчи Хĕрлĕ йалавлă фронта кайасшăн. Петр Охторкин йулташ колхозра ветсанитар пулса ĕçлет. Вăл лашасене йуратать.

— Епĕ призыва пырсан, комиссипредседателĕ мана:—„йурăхлă“ тесенех, хама Инçет-Хĕвелтухăç чиккине йама ыйтатăп. Манăн ĕмĕт пограничник-кавалерис пуласси,—тет Охторкин йулташ.

И. Скворцов.

Йуланутçă-призывниксен взвочĕсем

Дон çинчи çамрăк казаксем призыва пысăк праçнике кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илеççĕ. Станицăсемпе хутăрсем кăçал Хĕрлĕ Çара çĕршер ворошиловла кавалериссем параççĕ. Грушевски станици йуланутçă-призывниксен взодне тăратать. Вĕсем çу каçипех йуланутпа çӳремели спорта вĕреннĕ, спорт ĕçне опытлă джигит Смелов йулташ йертсе пынă. Призыв пункчĕсене ворошиловла йуланутçăсен взвочĕсем Бессергеневски тата Кривйански станицисенчен те пыраççĕ.

Старочеркасски станицинчи колхозник казак Аверкин çемйинче призыв кунне пысăк праçник пулать. Çав кунхине Аверкинсен ашшĕпе амăшĕ тăван Хĕрлĕ Çара хăйсен улттăмĕш ывăлне—комсомолĕц Артема ăсатаççĕ. Аверкинсен çиччĕмĕш ывăлĕ—комсомолĕц Васılий Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар службине çитес çулхине кайать.

(ТАСС).

Призывниксене кĕтсе илме хатĕр

Пайан пĕтĕм çĕршывĕпе Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот призывĕ пуçланать. Çитес кунсенче çар чаçĕсене призывниксем, çамрăк красноармейĕцсем килме тытăнаççĕ. Епĕр, Совет Сойузĕн Геройĕ И. А. Лакейĕв йертсе пыракан №-лĕ авиачаçри красноармейĕцсем, çамрăк призывниксене пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр. Хальхи вăхăтра епĕр çамрăк авиаспециалиссене хатĕрлекен шкулта вĕренетпĕр. Программăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, стажировкăна (практикăна) тухрăмăр. Стажировкă ăнăçлă иртсе пырать, епĕр кунта тĕплĕн хатĕрлевсе тухнă. Курсантсенчен нумайăшĕ теорине „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе пĕтерчĕç.

Çитес кунсенче зачот тытса кĕçĕн авиаспециалист йатне илетпĕр. Епĕр Хĕрлĕ Çар ретне килнĕренпе (пĕр çул хушшинче) нумай пĕлӳ илтĕмĕр. Çарăн вăйлă техникине пĕтĕмпех çĕнсе илессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

Çитес кунсенчех ак епĕр вĕренсе тухакан шкула çамрăк призывниксем килеççĕ. Вĕсене пысăк çитĕнӳсемпе ăшшăн кĕтсе илме хатĕрленетпĕр.

Курсант Андрейĕв.

Çамрăксене Хĕрлĕ Çара илесси

Çамрăксене Хĕрлĕ Çара илесси политикăла пысăк событи пулса тăрать. Хĕрлĕ Çара илес кунсем пирĕн пĕтĕм халăхăн уйавĕсем пулса пычĕç.

„Пирĕн патăрта çара йуратаççĕ, ăна хисеплеççĕ, уншăн тăрăшаççĕ Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен рабочисемпе хресченсен тĕнчере мал танхи хут хăйсен паттăр çарнĕ тунă, вăл çар господасене мар, халиччен чура пулнисене, хале ирĕке тухнă рабочисемпе хресченсене хӳтĕлет“ (Сталин. „Хĕрлĕ Çарăн виçĕ уйрăмлăхĕ çинчен“).

Хĕрлĕ Çара кайма хаваслăн хатĕрленекен пирĕн çамрăксене патша салтакĕсен асаплă пурнăçне ăнланма та йăвăр. Революцичченхи Российăн хулисемпе йалĕсем патша çарне хăйсен ачисене ăсатакан ашшĕ-амăшĕсен кульчăвĕпе, хурлăхĕпе тулнă пулнă. Асаплăрах ĕрусем çамрăксене çар службине илнĕ чухнехи хурлăхлă кунсене лайăх астăваççĕ.

Владимир Ильич Ленин çапла çырнă: „Российăн казармисем талкишпех, йĕркеренех кирек хăш тĕрмерен те йапăхрах пулнă; казармăри пек çынна хĕстерни, пусмăрлани урăх ниçта та пулмăн, çынна çав тери асаплантарни, хĕнени, йатлани урăх ниçта та пулман“ (Ленин, XIII т., III-мĕш изд. 396 стр.).

Кунта, салтаксен казарминче, самодержави çынрăн ним хирĕçме хăйайман вылăх тăвас тĕлĕшпе пур тĕслĕ майсемпе те ĕçленĕ.

Совет çĕршывĕн чикĕ лешĕнче, уйрăмăнах фашиссен çĕршывĕсенчи çарĕсенче, çамрăксем халĕ те çакăн пек йăвăрлăхсене тӳссе пурăнаççĕ. Асаплантарса, патак айĕнче тытса усраса, салтаксене халăхран, общĕствăлă-политикăлă пурнăçран пачах уйăрса, фашиссен пусмăрçисем салтак шинелĕсене тăхăннă рабочисемпе хресченсенчен фашисăмăн итлекен хĕçпăшалĕ туса хума тăрăшаççĕ.

Апат-çимĕç йапăххине, офицерсен етемле мар мăшкăлне чăтаймасăр салтаксем хăйсене хăйсем вĕлереççĕ йе çартан массăлăн тарнипе çăлăнăç шыраççĕ.

Йулашки вăхăтра Шахăв районĕ таврашĕнче кăна Бавариниче вырнаçнă Германи çарĕн тĕрлĕ пайĕсенчен тарса Чехословакине чикĕ урлă 17 салтак каçнă. Иайулĕн йулашки кунĕсенче Чехословакине тарса каçнă Германи салтакĕ каланă тăрăх, вăл çартан тарнин сăлтавĕ—апат çимĕç йапăххи, офицерсем салтаксенчен етемле мар мăшкăлани Вăл пурăннă полкра йулашки 3 — 4 уйăх хушшинче салтаксем хăйсене хăйсем вĕлерни 10 пулнă.

Италипе Йапони çарĕсенче те салтаксем çавăн пекех чăтăмсăр пусмăрта пурăнаççĕ. Самурайсен ĕмĕрхи йăлине—чĕррĕн плена лекмеле мар, плена лекиччен хăвна хăвăн вĕлермеле, текĕ йăлана пăсса, Йапони çарĕн рйадовой салтакĕсем плена пăраççĕ.

Ĕççыннисем чухăн, вышăлă-тутăлă пурăнни капиталисла çĕра илекен призывниксен сывлăхĕ ырханнинче палăрать. Германире 1935 çулта призыва кĕрекен çамрăксенчен сывлăх начар пирки çара илмесĕр пăрахăçланă хисеп 7,32 процент шутланнă, 1936 çулта вăл хисеп 11,47 процента çитиччен ӳснĕ. Германире 1935 çулта призыва кĕрекен çамрăксем хушшинче çурăмшăмми чирĕпе чирленисем 17,5 процент шутланнă, 1936 çулта—28,5 процент. Йапонире çара илме йурăхсăр çамрăксен хисепĕ 40 процента çитет.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар призывникĕсен сывлăхне кăтартакан цифăрсем пачах урăхла. Патша çарĕн салтакĕпе танлаштарсан, пирĕн красноармейĕцăн çӳлĕшĕ—4 сантиметр, кăкăр çавракăшĕ — 6 сантиметр, йăвăрăшĕ—5 килограм ытларах ӳснĕ.

Хĕрлĕ Çара сывлăхлă тата çирĕп ӳт-пӳлĕ çамрăксем кайаççĕ. 1936 çултах призыва йурăхлă çамрăксен хисепĕ 1912 çулхипе танлаштарсан 26 процент таран ӳснĕ. 1937 çулта ку хисеп тата та ытларах ӳснĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот социалисăмлă тăван çĕршыва сыхланине, вĕсем хăйсен вăй-хăвачĕпе Совет Сойузне социалисăмăн çирĕп крепăçĕ туса хунине совет халăхĕ лайăх пĕлет.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ совет халăхĕ хăйĕн ывăлĕсене Хĕрлĕ Çара мухтавлăн ăсатать, акă мĕншĕн ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ывăлĕсене политикăпа çар ĕçне вĕреннĕ çĕрте отличниксем тăвасшăн тăрăшаççĕ, хăйсен ывăлĕсем Хĕрлĕ Çарта пулса тунă çитĕнӳсемпе мухтанаççĕ. Çакăнта ĕнтĕ совет халăхĕ Сталинла Конституцире „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар службине—ССР Сойузĕн гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать“, тенĕ сăмахсене тарăннăн ăнланни палăрать.

„Колхозный труд“ колхозри 60 çулхи колхозник Софронăв йулташ хăйĕн ывăлĕ-красноармейĕц, отличник, комсомол организатăрĕ пулса пурăнакан çар пайĕн комиссарĕ патне çапла çырать:

„Хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çарта манăн тăватă ывăл. Вĕсем хамăрăн чаплă çĕршыв умĕнчи хăйсен хисеплĕ тивĕçне пурнăçа тӳррĕн, чĕререн парăнса туса пыни çинчен илтни мана питех те савăнтарать“.

Ильюшченко красноармейĕцăн тăвăнĕсем çар пайĕн комиссарĕ патне çапла çырса йанă:

„Есĕр йертсе пыракан çар пайĕнче пирĕн ывăл Борис пурăнать. Мухтавлă Хĕрлĕ Çара ăсатса, епĕр ăна службăра тӳрĕ, ыра кăмăллă пулма, Рабочисемпе Хресченсен правительствă лартнă командирсем мĕн каланине пурне те итлеме, çар техникине лайăх вĕренме каласа йанăччĕ. Çырса йарăр-ха пирĕн патăмăра, комиссар йулташ: Борис пирĕн наказа пурнăçа кĕртсе пырать-и, тĕл пеме вĕренет-и, йуратнă тăван çĕршыва сыхлама лайăх хатĕрленет-и?“

Совет халăхĕн патриотисăмне, тăван çĕршыва йуратнине, большевикла партине парăннине кăтартакан тĕслĕхсем кашни кун пиншерĕн пулаççĕ.

Пограничниксем тĕлĕнмеле паттăрлăх кăтартаççĕ, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр совет çĕршывĕн чиккисене сыхлаççĕ. Тăван çĕршывăн чиккисене сыхланă çĕрте вилнĕ пиччĕшĕсене улăштарма шăллĕсем пыраççĕ. Совет Сойузĕн геройĕсем—Чкалăв, Громăв, Коккинаки т. ыт. чаплă летчиксем çĕнĕрен те çĕнĕрен талкăшсене, авиацин тĕнчери рекордне çĕнеçĕне илеççĕ. Паттăр папанинĕцсем çĕнĕ открытисем туса наукăна пуйанлатаççĕ. Валентина Хетагурăвă чĕнсе калана хыççăн, Инçет-Хĕвелтухăç крайне малашне аталантарса пырас ĕçе хăйсен вăйне хумашкăн, çамрăк патриоткăсем, хĕрсем 100 пин ытла тухса кайрĕç. Чукунçул çинчи обходчик Артемйĕв çемйи 20 çул хушши Совет Сойузĕн чиккисене хытă сыхлать, ку таринчен вĕсем 170 шпион, диверсант тытнă. Хĕрлĕ Çара срукран ытла ĕçleme йулмашкăн красноармейĕцсем пиншерĕн ыйтаççĕ. Çар службин срукĕ тухнă хыççăн красноармейĕцсем нумайĕшĕ хăйсен çемйисене чĕнсе илсе, Инçет Хĕвелтухăçĕнче ĕçleme йулаççĕ.

Совет çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çара кайнă чухне мухтавлăхă, пысăк ответлăха туйаççĕ. Призыв пуçланиччен тахçан малтан вĕсем хăйсен хисеплĕ тивĕçне пурнăçа кĕртме хатĕрленеççĕ. Çамрăксем çар ĕçне призыв пункчĕсенче тăрăшса вĕренеççĕ. Сталин йачĕпе тăракан савăтри призывник-стахановĕц Беркулăв йулташ призыв умĕн самольот çинчен хăй тĕллĕнех сикнĕ. Çак савăтри стахановĕцсем Степанăвпа Орлов йулташсем танка тытса пыма вĕренсе çитнĕ.

Кăçалхи çул Хĕрлĕ Çара кайма çамрăксем татах та лайăхрах хатĕрленчĕç. Мускав облаçĕнчи хут пĕлм-и тата хут сахал пĕлекен призывниксем шкулсенче вĕренсе тухнă, вулас бойĕсенчен çуррине йахăн „Ворошиловский стрелок“, „Санитари оборонине хатĕр“ значоксен нормисене панă, „ГТО“ значок нормине 40 процент панă. Кăçалхи çул Хĕрлĕ Çар призывĕ социалисăмла пысăк çĕнтерӳсем тунă вăхăтра, ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерӳ тунă условисенче пулса иртет.

Фашисăмăн троцкисла-бухаринла агĕнчĕсем никам çĕнтерейми вăйлă Хĕрлĕ Çарăн хăватне хавшатма хăтланнă. Анчах вĕсен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕреймерĕ. Мухтавлă наркомвнуделĕцсем вĕсене тăрă шыв çине кăларса, вĕсен тăшманла ĕçне çийĕнчех пĕтерсе хучĕç.

Пирĕн çĕршыври социалисăма пĕтĕмпех парăннă çамрăксем пĕтĕм тăшмансене, шпионсене, диверсантсене, фашиссен троцкисла-бухаринла агĕнчĕсене паллама та вĕсене пĕтерсе пыма Ленин—Сталин партинчен вĕренсе пыраççĕ.

Призыв умĕн совет халăх патриотисăмĕн çĕнĕ хумĕ пулса иртрĕ. Вăл Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă мухтавлă фронтăн чаçĕсем совет çĕрĕ çине тапăннă Йапони самурайĕсен хĕçпăшалланнă бандисене пĕтерсе тăкнине пулчĕ. Мĕлйуншар совет патриочĕсем пиншер митингсенче хамăрăн тăван çĕршывăм чиккисене сыхлама Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тăма кирек хăш вăхăтра та хатĕр пулни çинчен каласа пачĕç.

Хĕрлĕ Çара кăçал хутшăнакан хĕрӳллĕ патриотсем 170 мĕлйунлă совет халăхĕн мирлĕ ĕçне тата телейлĕ пурнăçне сыхлакан Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн вăй-хăватне татах ытларах çирĕплетĕç.

Батальйон комиссарĕ
Н. Г. Цирульникăв.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра тата Левант фронтĕнче республиканĕçсем пăлхавçăсен пур атакисене те сирсе пăрахнă.

Центртри фронтра республикă çарĕсем Кастуер патĕнче чылай позицисем йышăнса, Мадрид—Бадахос чукунçул линийĕ патне çити малала кайнă. Республиканĕçсем, Вильйануева де ла Серена тата Кампанарис сектăрĕнче наступлени туса, чылай йалсене тытса илнĕ.

Августăн 29-мĕшĕнче республикă çарĕсем Пуенте дель Арсобиспо сектăрĕнче пăлхавçăсенчен чылай йалсем тата позицисем туртса илнĕ.

Сухар йатлă йуханшывран кăнтăр йенче республикă çарĕсем наступлени туса пыраççĕ. Республикă артиллерийĕ пăлхавçăсен командовани постне тата хĕçпăшал складне çĕмĕрсе тăкнă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Августăн 25-мĕшĕнче йапонĕçсем Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче (Центри Китай) „генеральнăй наступлени" тума пуçланине китайĕçсем вĕсене хирĕç калама çук хыттăн тăрса вăрçнипе тата Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕнче контрнаступлени тунипе кĕтсе илнĕ. Йапонĕçсем Жуйчан хулине тытса илнĕ хыççăн, вĕсене кунта малала кайма чарса лартнă.

Августăн 29-мĕшĕнче пĕр кун кунĕпех Жуйчан тавра хайар çапăçусем пынă. Китай çарĕсем хулана виçĕ йенчен пырса хупăрласа илнĕ.

Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕнче Китай çарĕсем контрнаступлени туса, августăн 28-мĕшĕнче Сусун хулине (Тайхуран 40 километр кăнтăр-хĕвеланăç йеннеле) тытса илнĕ. Китайĕçсем Сусун хулине йышăннă хыççăн, Йапонин Хуанмей хулинче тăракан çарĕсем хăйсен ытти çарĕсенчен татăлса йулнă, халĕ вĕсем кайала чакаççĕ.

Цйаньшань хулине китайĕçсем çаварса илнĕ, Китай çарĕсен хăшпĕр пайĕ хулана кĕрсе кайнă та ĕнтĕ.

Августăн 29-мĕшĕнче Китайăн çыранри артиллерийĕн снарйачĕсенчен Йапонин таватă транспăрт карапĕ тата пилĕк çар карапĕ сийенленнĕ.

(ТАСС).

Китай авиацийĕ çĕнĕ çитĕнӳ тунă

Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, августăн 30-мĕшĕнче ирхине, Кантон хулинчен çурçĕр хĕвелтухăçнелле сывлăшра Йапони ескадрильйисемпе Китайăн 19 самолечĕ хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Китай летчикĕсем Йапонин ултă бомбардировщикне персе антарнă.

Совет фильмисем йут çĕршывсенче

Иулашки уйăхсенче Иевропăри тата Америкăри екрансем çинче çакăн пек совет кинофильмисене пысăк ăнăçлăхпа кăтартаççĕ: „Петр I", „Возвращение Максима", „Ленин в Октябре", „Депутат Балтики", „Богатая невеста", „Если завтра война", „Последняя ночь" тата ытти те.

Ийуль уйăхĕнче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи чи пысăк сакăр хулара (Нью-Иорк, Сан-Франциско, Чикаго, Лос-Анжелос тата ыт.), совет хапрăкĕсенче тунă художествăлă кинофильмсем 16, документлă фильмсем 5 кăтартнă. Франнин 30 хулинче (вăл шутран—Парижре, Марсельре, Лионра, Булонра, Бордора, Ниппере) совет фильмисене 20 кăтартнă.

Совет производствинче тунă кинокартинăсене хальхи вăхăтра Чехословакири мĕн пур пысăк хуласенче кăтартаççĕ. Ийуль уйăхĕнче çĕнĕ совет кинофильмисемпе Англи, Швеци, Дани, Болгари, Норвеги тата Латви çыннисем паллашнă.

Англире тухакан „Обсервер" хаçат „Тринадцать" йатлă совет фильми çинчен çапла çырать: „Вырăссен хăйулă çӳжетсене хумхан тармала кăтартса пама вăрçă хыççăнхи вăхăтра никамăн та тенĕ пек пулман вăрттăнлăх пур. „Тринадцать" йатлă фильм совет киноискусствинчи лайăх традицисене усрать".

Англире тухакан тепĕр хаçат „Бырмингам газетт" çапла çырать: „Чи лайăх фильм тата чи лайăх актор выляннине çак ернере „Академия" кинотеатрта курма пулать, унта „Последняя ночь" фильм пырать".

„Совет Союзĕн шыври, çĕр çинчи тата сывлăшри вăйхăватне кăтартассинче фильм „Если завтра война" çав тери пысăк, хумхантаракан вырăн йышăнать",—тесе çырать Америкăра тухса тăракан „Уорлд телеграмм" йатлă хаçат.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен Пĕтĕм Союзри социалисăмлă ăмăртăвĕ

Харькăв облăçĕнчи Хотеньск районĕнчи колхозниксем мĕн пур колхозниксем патне тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен совхозсенчи работниксем патне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн Пĕтĕм Союзри социалисăмлă ăмăртуне организацилеме чĕнсе çыру йанă. Вĕсем хăйсем çине выльăх чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме, выльăхсен тухăçне ӳстерме, выльăхсене хĕл каçарма кăтартулă хатĕрлеме обйазательствăсем илнĕ.

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксем профсоюзĕн Тĕп Комитечĕ Хотеньск районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе пĕрлешсе государствă планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма пултарнă лайăх колхозсене, совхозсене тата районсене пама премисем тунă.

Пилĕк лайăх района, ăмăртура малтанхи вырăна кĕрешсе илекенсене, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе профсоюз Тĕп Комитечĕн кусса çӳрекен хĕрлĕ йалавне параççĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан работниксене премилеме пĕрер çăмăл автомашинă, икшер мотоцикл тата 10-шар пин тенкĕ укçа параççĕ.

Вунă малта пыракан колхоза, виçĕ выльăх ĕрчетекен совхоза, виçĕ лаша савăтне, племрассаднике—уйрăм работниксене премилеме кашнине пĕрер автомашинă тата пилĕк пин тенкĕ укçан параççĕ.

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе профсоюз Тĕп Комитечĕ колхозсенчи тата совхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановĕçсемпе малта пыракан организатăрсене премилеме 100 пин тенкĕлĕх фонд тунă.

Ăмăрту мĕнле иртнине пĕрремĕш хут 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнче тĕрĕслеççĕ. Ăмăртун пĕтĕм ĕçне майăн 1-мĕш тĕлне, выльăхсене кĕтӳсене кăларсан, шута илсе пахалаççĕ.

(ТАСС).

Виçĕ кун хушшинче 18.345 тенкĕ тӳленĕ

Государствăн иккĕмĕш пилĕкçуллăх займĕн 8-мĕш тиражĕн таблици пичетленсе тухсанах, Шупашкар ĕççыннисем хăйсен займ облигацийĕсене тĕрĕслеме тытăнчĕç.

Макарон хапрăкĕнчи комсод членĕсем Михайлăв, Йакавлĕв, Овчинникăв, Матвейĕвă. Бытикăвă йулташсем выльăв таблици тухсан икĕ кун хушши рабочисен хватерĕсем тăрăх çӳресе, займ выльăвĕсене тĕрĕслерĕç. Чылай çынсем выляса илнине палăртрĕç. Çакăн пек тăрăшса ĕçлекен комсодсем пулăшнипе тата займ выльăвĕсене тĕрĕслессине Шупашкарти перекет кассисенче лайăх йĕркеленипе виçĕ кун хушшинче 18345 тенкĕ выльăв укçи тӳленĕ. Ку шутран тĕп перекет касси 12895 тенкĕ, почтăри перекет касси 3755 тенкĕ, симĕс, пасарти перекет касси 580 тенкĕ, государствă банкĕ çумĕнчи перекет касси 1115 тенкĕ тӳленĕ.

Филиппăв.

А. Н. Радишчĕв

Александр Николайĕвич Радишчĕв—18-мĕш ĕмĕрти пысăк писатĕл тата революционер. Вăл 1749 çулта дворйан çемйинче çуралнă. Апла пулсан та, Радишчĕв пусмăрти хресченсен йăвăр та хурлăхлă пурнăçне ăнланса илсе, пысăк хăйулăхпа патша влаçне хирĕç тăнă.

Унăн революцилĕ шухăшĕсем французсен революцилĕ писателĕсемпе паллашнă хыççăнах çуралнă. Вăл 1790 çулта хăйĕн „Путешествие из Петербурга в Москву" йатлă кĕнекине пичетлесе кăларать. Ку кĕнекере вăл халăхăн хĕн-хурне уççăн сăнласа парать. „Тискер кайăксем, тăранма пĕлмен сĕлĕхсем",—тесе çырнă вăл çĕр улпучĕсем çинчен, Радишчĕв хресченсене çĕр улпучĕсене хирĕç тăма чĕннĕ.

„Унăн çĕрĕç хатĕрĕсене çĕмĕрсе тăкăр, унăн хуралтисене, авăнĕсене, ӳплисене вут тĕртсе çунтарăр та кĕлие калчасем çине вĕçтерĕр, çавсемпе вĕт унăн пусмăрлăхĕ пуçланнă",—тенĕ Радишчĕв, хресченсене ирĕке кăларма ыйтнă.

Радишчĕвăн кĕнеки революцилĕ пулнипе, ăна типографинче çапса кăларма килĕшмен. Вара автăр ăна хăйĕн килĕнчи типографинче пичетлесе кăларнă. Апла та кĕнеке халăх хушшине сарăлайман. Ку кĕнеке çинчен Кĕтерне патша пĕлсен, Радишчĕва Пугачовран та хăрушлăрах пăлхавçă вырăнне шутласа, арĕслесе суд умне тăратма приказ панă. Революцилĕ писатĕле суд персе пăрахмала тунă, анчах кайран вăл приговăрĕ Çĕпĕре 10 çуллăх ссылкăна йамала тунипе улăштарнă. Радишчĕв ссылкăра 7 çул пурăннă хыççăн, Кĕтерне патша вырăнне ларнă Павĕл патша ссылкăран таврăнма ирĕк панă.

Радишчĕв ссылкăра пурăннă чухне те хресченсене ирĕке кăларас шухăша пăрахăçа кăларман. Ссылкăран таврăннă хыççăн, саккунсем çыракан комиççинче ĕçленĕ чухне, хăйĕн шухăшĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çирĕп тăнă. Вăл апла пулни çĕр улпучĕ тепĕр çĕр улпучĕ аллинче ĕçлесе пурăнакан хресчене вĕлернĕшĕн штраф çеç тӳлемеле тунине сӳтсе-йавнă чухне лайăх палăрнă.

Çак кĕрешӳре хăй пĕччен пулнине курса, хресченсене ирĕке кăларасси пурнăçа кĕменнине туйса, йалт тăрăхса çитеt, йулашкинчен, емел ĕçсе вилет.

Радишчĕв хăйĕн пĕтĕм пурнăçне халăха парать, ăна ирĕке кăларассишĕн кĕрешсе, революци пулассине шанса вилет: „ку пурнăçа кĕме пултараймăн шухăш мар... епĕ вăл пурнăçа кĕрессине çĕр çул малтан курса тăратăп",—тет.

Радишчĕвăн шухăшĕсем Российăри революцилĕ шухăшсен ӳсĕмĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Малта пыракан бригадă

Тойтерекри (Ишлей р.) „Аврора" колхозра Соколов колхозник йертсе пыракан бригадă пур ĕçсемпе те малта пырать. Ку бригадă стахановла ĕçлекен бригадă пулнине, ĕçре кăтартса пырать.

Соколов бригади ийулĕн 28-мĕшне кĕрхи тырăсене пуçтарса кĕртсе çапса пĕтернĕ. Августăн 10 мĕшне пăрса йышши культурăсене тата çуртрисене вырса пĕтерсе, авăн çапассине те лайăх пахалăхпа вĕçленĕ.

Бригадăра стахановла йухăма тата ăмăртса ĕçлессине анлăн сарса пыни пур ĕçсене те вăхăтра, пахалăхлă туса ирттерме пулăшрĕ. Бригадăри пур колхозниксем те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. А. Соколовă тата Й. Федăрăвă комсомолкăсем ĕçре йаланах стахановла ĕçлесе, ĕç нормине 3—4 хут ытларах тултарса пычĕç.

Соколов йулташ йертсе пыракан стахановла бригадăн тырпул тухăçлăхĕ ытти бригадăсемпе танлаштарсан пысăкрах. Вăтам хисеппе кашни гектартан 100 пăт тĕштырă тухнă.

— Манăн бригадăна стахановла йат пачĕç. Çак йата епĕ хамăн бригадăра ĕçре чăн-чăнах стахановла ĕçленипе хисеплĕн тытса пытăм. Колхозра пур ĕçсем йенĕпе те малти рете тухрăм,—тет Соколов.

Çапла ĕнтĕ стахановла бригадă уйхир ĕçĕсене вĕçлерĕ. Çĕнĕ тырпулсем шанчăклă складсемпе амбарсенче. Вĕсене çирĕп хурал тăраççĕ.

Уйра çĕрулми тата пахча-çимĕçсем вăйлăн çитĕнеççĕ. Вĕсене пуçтарса кĕме те тĕплĕн хатĕрленнĕ Соколов бригади. Подвалсене йусаса, дезинфекци тунă.

П. С Скворцов.

Ăратлă выльăхсем

Сĕнтĕрвăрри районĕнче ăратлă выльăхсен хисепĕ çулран çулах ӳссе, йышлăланса пырать. Иртнĕ çулта колхозсенче ăратлă такасем 490 пуç пулнă, „горбатовски" текен ăратлă вăкăрсем 5 колхоз туйаннă. Кăçал „вырăнти меринос" ăратлă такасене Ростовран 100 пуç кӳрсе килнĕ, вĕсене йăлтах колхозсене панă. План тăрăх, кăçал „горбатовски" текен ăратлă вăкăрсем 50 пуç, „белая английская" текен ăратлă сысна ăçисем 35 пуç кӳрсе килмеле.

Ăратлă выльăхсен усси калама çук пысăккине колхозниксем аванах кураççĕ. „Красный труженик" колхоз иртнĕ çулсенче вырăнти ăратсăр сурăхсенчен çулталăк хушшинче пĕр сурăхран 3—4-шер кĕренке çăм касса илнĕ пулсан, кăçал вĕсем ăратлă сурăхсенчен 7—8-шер кĕренке çăм касса илчĕç. М. Чернов колхозник пĕр сурăхран 8 кĕренке çăм касса илчĕ, П Горшков—7,5 кĕренке, Ф. Чалтанăв—7 кĕренке тата ыт. те.

„Волгарь" колхоз та 1934 çултанпах ăратлă такасем усрать. Кăçалхи çул така çăмĕсене государствăна сутса колхоз 1000 тенкĕ ытла таса тупăш илчĕ. Халĕ каллех ăратлă такасем 5 пуç туйанчĕ. Пайанхи куна колхозра ăратлă такасем 15 пуç пур. Çичĕпӳртри „Паскав" колхоз çавăн пек такасем 22 пуç усрать, „Красное Сормово" колхоз—14 така, „Социалисăм" колхоз—11 така, „Культурă" колхоз—10 така усрать.

Нумай колхозсем ăратлă выльăхсем туйанаççĕ. Анчах Калăпкасси йалĕнчи, Çимакайри колхозсем пачах урăхла вара. Вĕсем ăратлă такасем туйанман-ха. Çавăн пекех Енĕç, Акшик, Чураш, Тури Карапаш, Вăта Пукаш, Тури Кушмара йалĕсенчи колхозсем те ăратлă выльăхсем туйанас плана пурнăçа кĕртессишĕн васкамаççĕ-ха.

Зоотехник П. ВАÇИЛЙĔВ.

Активлăн ĕçлекен колхозсем

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула вăхăтра туса пĕтерес ĕçре Çĕрпӳ районĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Район урлă 37 километр тăршшĕ чукунçул иртет. Çакна хамăрăн районри вăйпа тумала. Çавăнпа та кашни йалсовечĕпе колхоз правленин задачи вăл—чукунçул çинче ĕçлеме ĕç вăйĕ кирлĕ таран парса тăрасси. Палăртнă план тăрăх строительствăра Çĕрпӳ районĕнчен кашни кунах: çуранниксем 475 çын, лашапа ĕçлекенсем 110 çын, платниксем 30 çын ĕçлемеле.

Районри нумай йалсовечĕсемпе колхозсем чукунçул строительствинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра строительствăра „Сталинцы" колхозран 37 çын, „Пионер" колхозран—22 çын, „Ĕмĕт" колхозран 12 çын ĕçлеççĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен Çĕрпӳ районĕ начар ĕçлет-ха. Чылай йалсоветсемпе колхозсем строительствă ĕçĕнчен пăрăнса тăраççĕ. Паваркасси, Вĕрмер, Пушарпуç, Чурачăк тата Çырмапуç йалсовечĕсем ку таранă çитсе те чукунçул строительствине пĕр çын та йаман.

В. Дмитрийĕв.

Шыв паракан резервуар

Мăн Çавал шывĕ урлă Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул линийĕ каçнă çĕрте шыв паракан резервуар туса пĕтерчĕç. Резервуар çак çитес кĕске вăхăтрах Çĕрпӳ станцине шыв тăратма пуçлать.

Халĕ резервуар патĕнче ĕçлекенсем вальли 60 койкă вырнаçмалăх çурт строительстви пырать. Çурта çентябĕр уйăхĕнче туса пĕтермеле.

А. И.

Культурă таварĕсен магазинĕ

ЕЛĔК. Культурă таварĕсен районри магазинĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕтсе илес ĕçре шкулсене лайăх пулăшать. Вăл август уйăхĕнче районри шкулсене 10.193 учебник 12 862 тенкĕлĕх илсе килсе сутнă. Кăранташ 15,500 штук, мел 4 500 штук, тетрать 63.000 штук, пĕтĕмпе вĕренмели хатĕрсемпе учебниксем 37.446 тенкĕ те 14 пуслăх сутнă.

Вĕренӳ çулне лайăх кĕтсе илес, вĕренекенсене учебниксемпе вĕренмели хатĕрсем туйантарас майпа, августăн 24 мĕшĕнче йатарласа ачасен йармăрки туса ирттернĕ. Иармăркăна 2 пин ача ытла пухăннă. Иармăркăра учебниксемпе вĕренмели хатĕрсене 2.500 тенкĕлĕх сутнă.

Малашне сутма 16 пин кăранташ, 20 пин перо, 25 пин тетрать т. ыт. те хатĕрленĕ.

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ, анчах Чăвашгиз кирлĕ учебниксене халĕ те кăларса çитереймен. Магазинсенче 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш классенче вĕренмели тата ытти учебниксене те тупса илме çук.

В. Йефремăв.

Çĕнĕ аптекăсемпе магазинсем

Кăçал Чăваш республикĕнче çĕнĕ аптекăсемпе „Сангигиена" магазинĕсем чылай уçаççĕ.

Халĕ Елĕкре, Шăнкăртамра, Пăрачкав районĕнчи Сийавара çĕнĕ аптекăсем, Шупашкарта Карл Маркс урамĕнче иккĕмĕш аптекă, Канашра, Илйинкăра „Сангигиена" магазинĕсем уçнă.

Шкулсен строительстви мĕнле пырать

Кăçалхи августăн 25-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ республикăра шкулсем тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен постановлени йышăннă. Ку постановленире Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе райĕçтăвкомсенчи йертсе пыракан работниксем шкул строительстви ыйтăвĕ çине çителĕклĕ çаврăнса пăхманнипе, РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи августăн 28-мĕшĕнче шкулсене туса пĕтерсе усă курма тытăнас пирки йышăннă постановленире кăтартнă срукисем пурнăçа кĕменнине палăртнă. Строительствăн иртнĕ çулхи обйектĕнчен 4 шкул çеç (Кӳкеçри, Абашри, Еметкинри тата Милютинри) туса пĕтерсе, усă курма пуçланă. Шкулсем тăвас ĕç уйрăмăнах Вăрнар, Йĕпреç, Трак, Шăнкăртам тата Тăвай районĕсенче начар.

Вăрнар райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Гаврилăв йулташ финанс дисциплинине тӳрĕмĕнех пăснă. Шкул строительстви вальли уйăрнă укçаран саккуна пăссах 5000 тенкĕ електростанцине панă: вырăнти материалсене турттарас тĕлĕшпе тӳмали ĕçсемшĕн колхозсене авансла укçа панă, анчах материалсене халĕ те турттарман.

Чăраш Хирлеп шкулне тăвас ĕçе пурнăçламаншăн тата финанс дисциплинине пăснăшăн, шкул строительстви вальли уйăрнă укçана саккуна пăхăнмасăр урăх çĕре расхутланăшăн Вăрнар райĕçтăвком председателĕн заместителне С. Г. Гаврилăв йулташа ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йатланă.

Трак райĕçтăвкомĕ Упи шкулне тума лимит тăрăх уйăрса панă укçапа шкул строительстви вальли усă курманнине кура тата шкула тума та тытăнманнине кура, уйăрса панă укçана Трак райĕçтăвкомĕнчен илсе, Çĕрпӳ райĕçтăвкомне памала тунă.

Çутĕç Халăх Комиссарĕ Харитонăв йулташ тата райĕçтăвком председателĕсем çине шкулсене—пĕлтĕр тума тытăннисене те, кăçал тума тытăнисене те—çитес вăхăтсенчех туса пĕтерсе, усă курмала тăвас ответлăха хунă.

Çамрăк автăрсен канашлăвĕ

КӲКЕÇ. Августăн 28-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи çамрăк автăрсен, илемлĕ литературă ĕçнетин çеç пуçăннă йулташсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва парти райкомĕ хушнипе районра тухса тăракан „Ленин çулĕпе" хаçат редакцийĕ пухнă. Районри хаçат урлă йулашки вăхăтра чылай автăрсем палăрнă (Титов, Иегорăв, Сосковă т. ыт. те). Хаçатра час-часах пичетленсе пыракан пĕчĕк калавсем, очĕрксем, сăвăсем художествă йенчен йăлтах пиçсе çитмен, нумай çитменлĕхлĕ пулин те, çапах вĕсен автăрĕсен малашнехи ĕçĕ ăнăçулăн пулса пырасси усăмлăн курăнать. Чи малтанах вĕсене ку ĕçре лур йенчен те пулăшса, йертсе пыни, вăхăтра çителĕклĕн консультаци пани кирлĕ. Канашлу литкружок организацилерĕ. Ку кружок районри хаçат редакцийĕ çумĕнче пулать, ăна хаçат йертсе пырать.

Канашлура Уйăп Мишши, Митта Петĕрĕ пулчĕç. Вĕсем литературăри лару-тăрусем çинчен тата çамрăк автăрсен умĕнче тăракан задачăсем çинчен сăмах тухса каларĕç, хăйсен произведенийĕсене вуласа пачĕç.

Осоавиахим членĕсен билетне улăштарасси

Елĕк районĕнчи Осоавиахим организацийĕсем членсен билетне улăштарас ĕçе августăн 1-мĕшĕнче тытăннă. Кун умĕн Осоавиахим райсовечĕ Осоавиахим пуçламĕш организацисен председателĕсемпе инструктивлă канашлу ирттернĕ.

Халĕ пуçламĕш организацисенче пухусем пулса иртеççĕ, унта билетсене улăштарас йĕркепе паллашаççĕ. Членсен билетне улăштарас ĕçе лайăх иртерни Осоавиахим пуçламĕш организацисене çирĕплетме, ун ретне çĕнĕ членсем хутшăнтарма, Осоавиахимăн пĕтĕм ĕçне большевикла йĕркелеме май парать. Çакна тĕплĕн ăнланнă организацисенче билетсене улăштарнă вăхăтра массăлă-оборонă ĕçĕсене лайăх туса пыма тытăннă.

Йăлкăш колхозĕ çумĕнчи организацинче 40 членран 36 член „ПВХО" значокĕ илнĕ. Малтанхи çурçулшăн член укçине пĕтĕмпех пухнă.

Вăрман хуçалăхĕ çумĕнчи организацире пăшал пересси ПВХО ĕçне вĕренме 3 хут кружок занятийĕ туса ирттернĕ, кашни занятирех 20 шер çын пулнă.

Районри çыхăну çурчĕ çумĕнчи организацире çĕнĕрен 4 член илнĕ, член укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ.

Вырăс Сурăм йалсоветĕнчи „Доброволец" колхозри организацинче те билетсене улăштарнă вăхăтра çĕнĕрен 7 член илнĕ. Райсойуз, пульницă, çыхăну çурчĕ çумĕнчи организацисенче стрелковăй ĕçе вĕренессине лайăх йĕркеленĕ.

Анчах та членсен билетне улăштарасси пур çĕрте те пĕр пек пымасть-ха. Хăшпĕр пуçламĕш организацисен председателĕсем членсен билетне улăштарнă май массăлă ĕçе вăйлатма тăрăшмаççĕ. Йунтапари колхоз çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организацин председателĕ Прокопйĕв йулташ членсен билетне улăштарас йĕнĕпе нимĕн те тумасть, членсен пухăвне ирттермен. Çавăн пекех Асакассинчи (председателĕ Воробйов), Чулкасри (председателĕ Йегорăв) организацисенче те Осоавиахим членĕсен билетне улăштарасси начар пырать.

Осоавиахим членĕсен билетне улăштарнă вăхăтра членсен шутне нумайлатма, пур колхозсенче те пуçламĕш организацисем тума тата оборонă ĕçне вăйлатса йама тăрăшмала.

К. Никандрăв.

Хатĕрлев ĕçĕн йĕркине пăсни пулмала мар

Пирĕн республикре чăпта çапас ĕç анлăн сарăлнă, халĕ те сарăлсах пырать. Ку ĕç хăвăрттăн ӳсекен промышлĕннăçшăн тата çĕкленсех пыракан йалхуçалăхĕшĕн пысăк вырăнта тăрать. Колхозник-алăстаçсем тăвакан чăптасем, рогожăсем промышлĕннăçпа йалхуçалăх продукцийĕсене кирлĕ çĕре çитермели тата упаковкă тумали лайăх материалсенчен пĕри пулса тăраççĕ.

Пуриншĕн те паллă, пирĕн çĕршывра халăх хуçалăхĕн пур отрăçлисем те çирĕп план тăрăх ĕçлеççĕ. Чăпта çапас тата курăсран тунă йапаласене хатĕрлесси те планпа пулса пырать. Вăл ĕçе тĕпрен илсен промысла кооперации пĕрлешĕвĕсен — Чăвашкульпромсойузĕн тата инвалидсен кооперации сойузĕн пурнăçа кĕртсе пымала. Хатĕрленĕ чăптасене тата рогожăсене вырнаçтарасси те планлакан органсем панă нарйадсем тăрăх пулса пымала.

Çак йĕркене чылай хатĕрлев организацисем пăсаççĕ. „Главснаблегпром" организацин Шупашкарти хатĕрлев кантурĕ (пуçлăхĕ Кульков) курăсран тунă йапаласене пахалăх тата хисеп йенчен правительствă çирĕплетнĕ нормăсене пăхăнмасăр хатĕрленĕ. Браксен шутне кĕрекен чăптасене пĕрремĕш сурт хакĕпе илнĕ. Вăрнарти тата Ишлейри „Мосзаготторг" пункчĕсем чăпта тата рогожăсем илессине саккунсене пăхăнса тăвас вырăнне, кооперации организацисенчен вăрттăн илеççĕ.

Саккунсене пăсакансемпе кĕрешес тĕлĕшпе прокуратурă органĕсем те тимлĕн ĕçлемеççĕ. Вĕсем Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата кооперации организацисем тăратнă материалсем çине çăмăллăн пăхаççĕ. Ку тарана çитсе, материалсем нумай пулнă пулин те, пĕр организацине те ответ тыттарман.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи августăн 18-мĕшĕнче курăсран тунă йапаласене хатĕрлессине йĕркелесси çинчен йышăннă постановленипе ĕçе лайăхлатма татăклă кăтартусем пачĕ. Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариатне хатĕрлев ĕçне йĕрке тăрăх туса пынине тĕрĕслесех тăма, прокуратурăна хатĕрлев йĕркисене пăсакансем çинчен панă материалсене пăхса тухассине хăвăртлама хушнă. Çак кăтартусене çине тăрса пурнăçа кĕртмеле. Хатĕрлев ĕçĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтермеле, курăсран тăвакан йапаласен пахалăхне лайăхлатмала.

Т. Алексейĕв.

Ответлă редактăр
Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Шупашкарти ерех савăтне
платниксем, штукатурсем, кăмака тăвакансем
кирлĕ
2—2

Шупашкарти
кооператив техникумне
1939 çулхи ийулĕн 1-мĕшĕччен пурăнма
УЙРĂМ ПӲЛĔМСЕМ
курсантсене пурăнма
УЙРĂМ ВЫРĂНСЕМ
КИРЛĔ
Хак килĕшӳ тăрăх
Çак адрĕспе пĕлтермелле: телефонсем № 7—87 тата 4—65, çырупа—ул. Карла Маркса, д. № 80 Кооптехникум.
ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна çыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.
Уполномоченный Чувашглавлита № 460 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 683.